ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧЕ

1952 çул
Март
8
шăматкун
№ 49 (8701)
Хакĕ 20 пус.
35-мĕш çул тухать.

ПАЯН—ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ХĔРАРĂМСЕН КУНĔ

Сывă пулччăр социализмлă çĕршывăн хĕрарăмĕсем—Тăван çĕршывăн çуламлă патриоткисем, коммунизм строительствинче активлă ĕçлекенсем!

Союз Совечĕпе Национальноçсен Совечĕн 1952 çулхи мартăн 6-мĕшĕнче пулнă пĕрлехи ларăвĕ çинчен

ИНФОРМАЦИЛЛĔ ПĔЛТЕРŸ

Мартăн 6-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре, Кремльте, Кремльти Пысăк дворецра Союз Совечĕпе Национальноçсен Совечĕн пĕрлехи ларăвĕ пулчĕ.

Лару председателĕ — Союз Совечĕн председателĕ М. А. Яснов депутат ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджечĕ тата ССР Союзĕн 1950 çулхи государство бюджетне пурнăçлани çинчен доклад туиа СССР Финанс министрне А. Г. Зверев юлташа сăмах парать.

А. Г. Зверев доклад туса пĕтернĕ хыççăн лару председателĕ, кун йĕркинчи ыйтусене сўтсе явас тĕлĕшпе палатăсем йышăннă йĕрке тăрăх, Бюджет комиссийĕн содоклачĕсене, бюджета сўтсе явассине тата бюджета çирĕплетессине Союз Совечĕн тата Национальноçсен Совечĕн уйрăммăн ирттерекен ларăвĕсенче пăхса тухасси çинчен пĕлтерет.

Çакăнпа Союз Совечĕпе Национальноçсен Совечĕн пĕрлехи ларăвĕ хупăнать.

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ХĔРАРĂМСЕН КУНĔ

Паян Мартăн 8-мĕшĕ—Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ. Совет халăхĕ çак куна кăçал Тăван çĕршывăн социализмла экономикипе культури малалла хăватлăн ўссе пынă условире, коммунизмăн материально-техникăллă никĕсне ăнăçлă хывнă условире, пĕтĕм тĕнчери мире хўтĕлесе хăварассишĕн, халăхсем хушшинчи туслăха малалла çирĕплетессишĕн кĕрешнĕ условире паллă тăвать.

Большевиксен партийĕпе Совет правительстви, аслă Сталин совет хĕрарăмĕсен творчествăллă пултарулăхне аталантарма, политикăллă тата культурăллă шайне ўстерме, ăпланулăхне çĕклеме, ĕçри пуçарулăхне вăйлă сарса пыма пысăк майсем туса пачĕç. Вĕсем совет хĕрарăмне пысăк хисепе çĕклерĕç. Совет Союзĕнчи хĕрарăмсем пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле Совет государствин тулли влаçлă хуçисем пулса тăраççĕ. Вĕсем хуçалăхпа культурăн мĕнпур участокĕсенче, государствăн тата пирĕн çĕршыври общесвăллă-политикăллă пурнăçăн мĕнпур ĕçĕнче хăйсене тивĕçлĕ вырăн йышăнчĕç, пирĕн социализмлă обществăн аннинă та пултарулла вăйĕ пулса тăчĕç.

Мĕнпур совет халăхĕпе пĕрле аслă çĕнтерўсен чаплă çулне мухтавлăн утса тухнă совет хĕрарăмĕ паян, савăнăçлă уяв кунĕ, Совет влаçне, Ленин—Сталин партине, аслă Сталина чунтан-чĕререн тав тăвать.

Чăваш хĕрарăмĕн Октябрьти Социализмлă революцичченхи пурнăçĕ уйрăмах йывăр та хĕн-хурлă пулнă. Халĕ унăн пурнăç çулĕ аслă вырăс халăхĕн, Совет Союзĕнчи ытти мĕнпур халăх хĕрарăмĕсен пурнăç çулĕ пекех, анлă та такăр. Совет влаçĕ çулĕсенче ĕçчен чăваш хĕрарăмĕн пултарулăхĕ тĕлĕнмелле хăвăрт ўссе пынăрчĕ. Вăл колхозри, МТС-ри, заводри, фабрикăри рядовой ĕçсенчен пуçласа государствăн ответлă ĕçĕсене туса пыма пултаракан деятель пулăчĕн ўсрĕ.

Совет хĕрарăмĕсене государствăна тытса пырас ĕçе тата совет строительствине активлăн хутшăнтарнинче совет демократийĕ яр-уççăн курăнать. Пирĕн çĕршыври 280 хĕрарăм—СССР Верховнăй Совет депутачĕсем, 2.209 хĕрарăм—союзлă тата автономиллĕ республикăсен Верховнăй Совечĕсен депутачĕсем, çур миллион ытла хĕрарăм—вырăнти Советсен депутачĕсем пулса тăраççĕ. Чăваш халăхĕн чи пултарулла та мухтавлă хĕрарăмĕсене—4 çынна СССР Верховнăй Советне, 4 çынна РСФСР Верховнăй Советне, 33 çынна Чăваш АССР Верховнăй Советне, 3.500 хĕрарăма вырăнти Советсене депутата суйланă.

Хуçалăхпа культура строительствинче 830 пин хĕрарăм-специалист ĕçлет. Миллион ытла хĕрарăмпа хĕрачасем аслă шкулсенче тата специальнăй вăтам шкулсенче вĕренеççĕ. Совет хĕрарăмĕсем промышленноçра, транспортра, çĕнĕ строительствăра, ялхуçалăхĕнче, халăха вĕрентес тата халăх сывлăхне сыхлас ĕçре, наукăпа искусство, культура ĕçĕнче мухтава тухаççĕ.

Пирĕн социализмлă Тăван çĕршыв совет патриоткисен паттăрла ĕçне пысăка хурса хаклать. 70 хĕрарăма Совет Союзĕн Геройĕ ятне, 2.170 хĕрарăма Социализмлă Ĕç Геройĕ ятне панă. Хĕрарăмсенчен 730 пин çынна ССР Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене парса наградăланă 579 хĕрарăм Сталинла преми лауреачĕсем пулса тăчĕç. Пирĕн паттăр земляк З. Парфенова—Совет Союзĕн Геройĕ. Вăйлă тырпул туса илес ĕçре палăрнă сичĕ хĕрарăм—Социализмлă Ĕç Геройĕ. 2.000 хĕрарăм кăкăрĕ çинче ССР Союзĕн орденĕсемпе медалĕсем суталса тăраççĕ.

Кивĕ пурнăç вăхăтĕнче пирĕн çавнашкал хĕрарăмсем пулман, пулма та пултарайман.

Пирĕн çĕршывра хĕрарăмсем пысăк хисепре. Халăх, государство ача амăшĕсемшĕн тата ачасен сывлăхĕшĕн куллен тăрăшаççĕ. Çак ĕç валли государство çулсерен нумай укçа-тенкĕ парса тăрать. Пирĕн республикăра кăна 1951 çулта ача амăшĕсене пулăшса 35 миллион тенкĕ ытла тўленĕ.

Совет çĕршывĕнче ача-пăча учрежденийĕсен—ача яслисен, ача садĕсен, пионер лагерĕсен, ытти учрежденисен хисепĕ çулсерен ўссе пырать.

Совет правительстви, большевиксен партийĕ, аслă Сталин тăрăшнипе хавхаланса, совет патриоткисем коммунизм строительствинче çĕнĕрен çĕнĕ çитĕнўсем тăваççĕ.

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральнăй Комитечĕ партин пур организацийĕсене те **Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунне совет хĕрарăмĕсен вăйне социализмлă экономикăпа культурăна çĕнĕ хăватпа ўстерсе пырассишĕн кĕрешме мобилизацилес, хĕрарăмсене халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсенче те 1952 çулхи плана срокчен тултарассишĕн кĕрешмелли пĕтĕм халăхăн социализмлă ăмăртăвне хутшăнтарас паллăпа ирттерме хушать.** Парти организацийĕсен хĕрарăмсене политикăллă воспитани парас ĕçе вăйлатас пулать, вĕсен культурăпа техника пĕлĕвне, политикăллă тата производствăллă активлăхне ўстерсе пырассишĕн пĕрмаях тăрăшмалла. Партипе совет, профсоюз тата комсомол организацийĕсен хĕрарăм кадрĕсене уйăрса лартма лайăх майсем пулса тăнипе туллин усă курмалла, малта пыракан хĕрарăмсене парти, совет, хуçалăх, профсоюз тата комсомол органĕсенчи ертсе пыракан ĕçсене, халăх хуçалăхĕпе культурăн мĕнпур отраслĕсенчи ертсе пыракан ĕçсене хăюллăн уйăрса лартмалла.

Совет Союзĕн аслă тĕслĕхĕ халăх демократи çĕршывĕсенчи хĕрарăмсене хăйсен çĕнĕ пурнăçне тăвассишĕн кĕрешме хавхалантарать. Китай хĕрарăмĕсем çĕршыв промышленноçĕпе ялхуçалăхне юсас тата демократиллĕ йĕркесем тăвас ĕçе активлă хутшăнаççĕ. Польша, Чехословаки, Венгри, Румыни, Болгари, Албани, Монголи Халăх Республикисен хĕрарăмĕсем социализм тăваççĕ. Демократиллĕ Германи республикинчи хĕрарăмсем пĕрлĕхлĕ, никама пăхăнман, демократиллĕ Германи тăвассишĕн кĕрешеççĕ.

Мартăн 8-мĕш кунне капитализмлă çĕршывсенчи, колонисенчи тата пăхăнса тăракан çĕршывсенчи хĕрарăмсем капитал ĕççыннисен пурнăçĕ çине тата демократиллĕ прависем çине хытă тапăннă условисенче паллă тăваççĕ.

Тĕнчери çĕнĕ вăрçă хăрушлăхĕ çывхарнă вăхăтра Совет Союзĕ ертсе пыракан мирпе демократи лагерĕ хăйĕн речĕсене тата тачăрах пĕтĕçтерсе пырать. Миршĕн кĕрешекенсен пĕтĕм тĕнчери фрончĕ ўсет тата тĕрекленет. Пĕтĕм тĕнчери ĕç хĕрарăмĕсем паянхи куна миршĕн, çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне хирĕç, Америкăпа Англи империалисчĕсем хатĕрлекен вăрçа хирĕç кĕрешессине вăйлатма чĕнекен лозунгсемпе палăртаççĕ. Тĕнчери ĕç хĕрарăмĕсем атомлă хĕçпăшала чарса лартма, хĕçпăшалсене чакарма, мире сыхламалли килĕшў тума ыйтаççĕ, Америка империализмĕн Корейăри юнлă агрессийĕ хирĕç кĕрешеççĕ.

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен демократиллĕ юхăмĕнче Совет Союзĕпе, халăх демократи çĕршывĕсенчи хĕрарăмсем малта пыраççĕ. **Совет хĕрарăмĕсен тивĕçĕ,**—тесе кăтартса пачĕ ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ,—**мĕнпур çĕршывсенчи хĕрарăмсемпе интернационаллă çыхăну тытассине анлă сарасси тата çав çыхăнăва тĕренлетесси, вĕсемпе пĕрле пĕтĕм тĕнчери миршĕн, халăхсем хушшинчи туслăхшăн, тĕнчери çĕнĕ вăрçа пуçарма хатĕрленекен империалистсене хирĕç активлă кĕрешесси пулать.** Çакна асра тытса, совет хĕрарăмĕсем Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсемпе интернационаллă çыхăнусене ывăнма пĕлмесĕр çирĕплетсе пырĕç, вĕсемпе пĕрле пĕтĕм тĕнчери мирлĕ пурнăçшăн, халăхсем хушшинчи туслăхшăн, çĕнĕ вăрçă чĕртекен империалистсене хирĕç кĕрешĕве татах вăйлатĕç, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн мĕнпур хастарлăхпа ĕçлĕç.

Совет хĕрарăмĕсене—пирĕн Тăван çĕршывăн çуламлă патриоткисене, коммунизм тăвас тĕлĕшпе ырми-канми ĕçлекенсене—чыс та мухтав!

СССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔН ЛАРĂВĔ

ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджечĕ тата ССР Союзĕн 1950 çулхи государство бюджетне пурнăçлани çинчен

СССР Финанс министрĕ А. Г. ЗВЕРЕВ тунă доклад

Депутат юлташсем! ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджечĕ совет халăхĕн коммунизм обществишĕн кĕрешсе çĕнĕ çĕнтерўсем тăвас ирĕкне палăртса тăрать. Бюджетра коммунистсен партийĕпе Совет Правительстви промышленноçа, ялхуçалăхне, транспорта малалла аталантарас, Совет Союзĕнчи халăхсен пурнăç шайне хăпартас тĕлĕшпе кăларса тăратнă пысăк задачăсем палăрса тăраççĕ. Бюджет цифрĕсенче пирĕн партипе правительство совет халăхĕн культурине пур енĕпе те аталантарассишĕн, халăх хуçалăхĕн мĕнпур отраслисем валли нумай йышлă кадрсен специалисчĕсем хатĕрлессишĕн, малта пыракан совет наукине аталантарассишĕн тăрăшни яр-уççăн курăнса тăрать.

Совет халăхĕ çултан-çул пирĕн çĕршывăн мирлĕ хуçалăх тата культура строительствинче, коммунизмăн материально-техникăллă никĕсне хывассишĕн пыракан кĕрешўре çĕнĕрен те çĕнĕ çитĕнўсем тăвать.

1951 çулта социализмлă экономикăн мĕнпур отраслисенче, чи малтан, пирĕн совет индустрийĕнче малалла пысăк утăм тунă. Промышленность продукцийĕ туса кăларасси 1950 çулхипе танлаштарсан 16 процент ўснĕ, 1940 çулхи шайран икĕ хут ытла ўснĕ.

1951 çулта производствăн мĕнпур отраслисем техникăпа тата ытларах хĕçпăшалланчĕç. Пирĕн çĕршыв машиностроенийĕ çĕнĕ йышши пысăк тухăçпа ĕçлекен машинăсемпе механизмсем çĕнĕрен нумай туса кăларчĕ, вĕсем халăх хуçалăхне малалла яма май параççĕ, ĕçе çăмăллатаççĕ, ĕç тухăçлăхне хăпартаççĕ.

Çĕнĕ техникăна ĕçе кĕртсе пынипе, производствăна лайăхрах организациленипе, ĕççыннисен творчествăллă пуçарăвĕ ўснипе, социализмлă ăмăрту малалла аталаннипе промышленноçра ĕçлекен рабочисен ĕç тухăçлăхĕ 1950 çулхипе танлаштарсан 10 процент ўснĕ.

Ĕç тухăçлăхĕ ўсни, производствăллă пултарулăхсемпе, çавăн пекех тата пĕр таварпа тата материалсемпе лайăхрах усă курни промышленность продукцийĕн хăйне ларакан хакне чылай йўнетме, промышленноçра накоплени тума май пачĕç.

1951 çулта социализмлă ялхуçалăхĕ çĕнĕ техникăпа усă курса ĕçленĕ, колхозсемпе совхозсенче ялхуçалăх ĕçĕсене лайăхрах организациленĕ, малта пыракан агрономи наукин çитĕнĕвĕсемпе анлăн усă курнă никĕс çинче малалла çĕкленсе пычĕ. Тĕштырă тата техникăллă культурăсем акмалли çĕр лаптăкне чылай ўстернĕ, выльăх-чĕрлĕх йышĕ ўсрĕ, унăн тухăçлăхĕ хăпарчĕ. ССР Союзĕн чылай районĕсенче çанталăк начар тăчĕ пулсан та, 1951 çулта тĕштырă культурисем 7.400 миллион пăт туса илнĕ, вăл шутран апат-çимĕç культурисем—тулă тата ыраш 1950 çулхинчен чылай ытларах пулнă.

СССР наци тупăшĕ 1950 çулхипе танлаштарсан, танлаштармалли хакпа шутласан, 12 процент ўснĕ. Çакă вăл халăх пурнăçне чылай лайăхлатма, строительство ĕçĕсен пысăк программине пурнăçлама май пачĕ.

1951 çулта капитальнăй ĕçсем тума укçа-тенкĕ хывасси 1950 çулхипе танлаштарсан 12 процент ўснĕ, вăрçă умĕнхи 1940 çулхипе танлаштарсан вăл икĕ хут ытларах пулнă.

Совет халăхĕ пысăк çĕкленўпе Атăлпа Дон çинче, Днепрпа Аму-Дарья çинче коммунизмăн сталинла аслă стройкисен планне ăнăçлă пурнăçлать. Хăватлă гидроэлектростанцисем, каналсем, шăвармалли системăсем тăвас ĕç ăнăçлăн пурнăçа кĕрсе пырать.

Промышленноçпа ялхуçалăхне аталантарас ĕçре пысăк çитĕнўсем тунипе, ĕç тухăçлăхĕ ўснипе, продукцин хăйне ларакан хакĕ йўнелнипе СССР Правительстви 1951 çулта куллен кирлĕ таварсен государство хакĕсене вăрçă хыççăнхи тапхăрта тăваттăмĕш хут йўнетрĕ. Çакăн хыççăн совет укçи хакĕ тата ытларах ўсрĕ, рабочисемпе служащисен реальнăй ĕç укçи, хресченсен тупăшĕ ўсрĕ, халăха тавар сутасси ўсрĕ.

Пирĕн хуçалăхпа культура строительствинчи çитĕнўсенче советлă общество тата государство стройĕн хăватлă вăйĕ курăнса тăрать. Çак вăй коммунизм обществи тумалли сталинла аслă ĕçсен планĕсене пурнăçлас ĕçе халăхăн хăватлă пултарулăхне çĕклерĕ.

Совет халăхĕ мухтавлă коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, аслă Сталин ертсе пынипе шанчăклăн малалла çĕнĕ çĕнтерўсем патне пырать. (**Нумайччен алă çупаççĕ**).

Совет Союзĕнчен тĕслĕх илсе, вăл коммунизм строительствинче тунă çитĕнўсемпе хавхаланса халăх демократи çĕршывĕсем социализм никĕсне хывас ĕçре пысăкрах та пысăкрах çитĕнўсем тăваççĕ. 1951 çул вĕсемшĕн халăх хуçалăхне малалла ўстермелли, халăхăн анлă сийĕсен пурнăçĕпе культурине малалла çĕклентермелли çул пулчĕ. Çĕнĕ пурнăç тăвас ĕçре аслă Китай халăхĕ пысăк çитĕнўсем турĕ. Кĕске вăхăт хушшинче Китай халăх республики халăх демократи диктатури стройне тĕреклетме пултарчĕ, капитализм тĕнчинчен экономика енĕпе никама пăхăнман çĕршыв тăвассишĕн пыракан кĕрешўре, çĕршыва индустриализацилессишĕн, культурăна ўстерессишĕн пыракан кĕрешўре пысăк çитĕнўсем тума пултарчĕ. Мирлĕ строительство ĕçне Германи демократиллĕ республики ăнăçлă аталантарса пырать.

Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсем мирлĕ ĕç туса пынă вăхăтра, Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсем ертсе пыракан империализм лагерĕнче çĕнĕ тĕнче вăрçине хатĕрлевесси ытларах та ытларах ўссе пырать.

Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсем Хĕвеланăçĕнче—Германи империализмне, Хĕвелтухăçĕнче—Япони империализмне тепĕр хут ура çине тăратса çĕнĕрен икĕ вăрçă вучахне хатĕрлеççĕ. Паллă ĕнтĕ, иртнĕ вăрçăра çак вучахсене пĕтерме этемлĕхĕн пысăк йывăрлăх тўссе ирттермелле пулчĕ.

Америка империалисчĕсем çĕнĕрен агрессиллĕ блоксем тăваççĕ, ют çĕршыв территорийĕсенче çĕршер çар базисем тăваççĕ, мĕнпур йышши хĕçпăшалсем туса кăларассине ўстереççĕ, граждан промышленноçне чакараççĕ.

Хĕçпăшалланасси вăйланни тата капиталистла монополисем пысăк услам илес шутпа хуçалăха милитаризацилени халăхăн анлă массине чухăнлатса хăварасси патне илсе пыраççĕ.

Хальхи вăхăтра Америка монополийĕсем илекен услам вĕсем иккĕмĕш тĕнче вăрçи çулĕсенче илнĕ усламран 2 хут ытла, вăрçă умĕнхи çулсенче илнĕ усламран 7 хут иртсе каять.

Çĕршыва милитаризациленинчен тата хĕçпăшалсене ўстернинчен тухса тăракан пĕтĕм йывăрлăх ĕççыннисен çурăмĕ çине тиенет, эксплуатаци вăйланать, налог йывăрлăхĕ ўсет, куллен кирлĕ массăллă таварсен хакĕ ўсет. США-ра халăхран илекен налог укçи 60 миллиард доллара çитет, çакă вăл 1943 çулта пухнă налог укçинчен виçĕ хут ытларах пулать. Вăрçăччен­хипе танлаштарсан ĕç укçи сахал илекен çынсенчен подоходнăй налог шутласа илмелли ставка 8—10 хут ўснĕ.

США-ра тата империализм лагерĕн ытти çĕршывĕсенче çар расхочĕсем ытла та ўссе кайнă пирки вĕсен экономика тата финанс ĕçĕсем сасартăк начарланчĕç, бюджетра дефицит ўссе пырать, инфляци вăйланать. 1951—1952-мĕш бюджет çулĕн малтанхи çур çулĕнче США бюджетĕнче дефицит 7,5 миллиард доллар е пĕтĕм расходсен тăватă пайĕнчен пĕр пайĕ чухлĕ пулнă.

Америка монополисчĕсем хĕçпăшаллланас хăвăртлăхсене ўстерме хушнине пурнăçласа, Англири пуç пулса тăракан ушкăнсем çĕршыва апат-çимĕç таварĕсем кўрсе килессине чакараççĕ, халăха апат-çимĕç тата топливо тăратассине чакараççĕ, ĕç укçине ўстермесĕр тытса тăраççĕ, çав вăхăтрах тавар хакĕсене ўстереççĕ. Вĕсем хăйсен çĕршывне панкрутпа выçлăх умне кăларса тăратрĕç.

Англи балансĕнче дефицит вĕçĕмсĕр ўссе пырать, Англин долларсен запасĕ хăвăрт чакса пырать. 1951 çулăн иккĕмĕш çур çулĕнче çак запассем 40 процент таран чакнă. Англи укçи хакĕ йўнелсе пырать, ăна тĕнчере пур çĕрте те шанми пулчĕç.

Çавăн пекех Франци экономикипе финансĕ те уйрăмах пысăк йывăрлăха кĕрсе ўкнĕ. Бюджетпа [illegible] суту-илў балансĕн дефицичĕ çултан-çул ўсет, франк хакĕ питĕ хăвăрт чакса пырать. 1951 çул вĕçĕ тĕлне Франципе çўрекен укçа шучĕ нихçан пулман чухлĕ пулса тăнă — 1 триллион та 847 миллиард франка çитнĕ. Вăрçăччен­хи çулсемпе танлаштарсан халăх хушшинче çўрекен укçа шучĕ 16,5 хут ўснĕ. 1951 çулта Францире вакка сутакан таварсен хакĕ вăрçăччен­хипе танлаштарсан 30 хут ўснĕ. Çав вăхăтрах, рабочисен ĕç укçи вара 13 хут кăна ўснĕ. Хальхи вăхăтра Францири ĕççыннисем вăрçăччен­хи çулхисенчен чылай начартарах пурăнаççĕ.

Капитализмлă çĕршывсенче пур майсемпе те вăрçă çинчен сухăрашнă вăхăтра, урса хĕçпăшалланнă вăхăтра, Совет Союзĕ çирĕппĕн мир политики тытса пырать, вăрçă чĕртекенсене тăрă шыв çине кăларать. Пирĕн çĕршыв мир ялавне çўле çĕкленĕ аслă Сталин ертсе пынипе мирпе демократи вăйĕсен малти ретĕнче пырать, пĕтĕм прогрессивлă этемлĕхе миршĕн кĕрешме пĕтĕçтерет. (**Алă çупаççĕ**).

Совет правительствин мирлĕ политики çинчен пирĕн çĕршывра хуçалăхпа культура строительстви анлă сарăлни кăтартса парать. ССР Союзĕн 1950 тата 1951 çулсенчи бюджечĕсене ăнăçлăн тултарни пирĕн çĕршывăн экономикипе культури ўснине яр уççăн кăтартса парать.

ССР Союзĕн 1950 çулхи государство бюджетне, СССР Верховнăй Советне çирĕплетме тăратнă отчет тăрăх, тупăшсем енĕпе 422,8 миллиард тенкĕ, расходсем енĕпе—413,3 миллиард тенкĕ, 1951 çулта малтанлăха шутланă тăрăх: тупăшсем енĕпе 468,0 миллиард тенкĕ, расходсем енĕпе—441,3 миллиард тенкĕ пурнăçланă.

1951 çулта, 1950 çулхи пекех, бюджета тупăшсем енĕпе расходсенчен чылай ирттерсе тултарнă.

ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕ çирĕплетнĕ ССР Союзĕн 1951 çулхи государство бюджетне тупăшсем енĕпе 9,3 миллиард тенкĕ ирттерсе тултарнă. Бюджет тупăшĕсем 1950 çулхипе танлаштарсан 45,2 миллиард тенкĕлĕх е 10,7 процент чухлĕ ўснĕ.

Бюджет тупăшĕнче тĕп вырăн социализмлă предприятисемпе организацисенчен кĕнĕ укçа йышăнса тăрать. Бюджета 1950 çулта государство предприятийĕсенчен кĕнĕ укçа 40,4 миллиард тенкĕлĕх пулнă пулсан, 1951 çулта 47,8 миллиард тенкĕлĕх пулнă е 18,5 процент ўснĕ, çавăн пекех оборотран илекен налог укçи 236,1 миллиард тенкĕрен 247,8 миллиард тенкĕ таран е 4,9 процент ўснĕ.

СССР государство бюджечĕн социализмлă предприятисенчен илекен тупăшĕ ўсни материалсемпе оборудованин куртăмăн сутакан хаксем тата куллен кирлĕ таварсен хакĕ чылай чакнă условисенче пулса пынă.

1951 çулта халăхран илекен налог укçи пухмалли плана 101,9 процент, государство заемĕсем тăрăх пухмалли плана 110,6 процент тултарнă.

ССР Союзĕн 1951 çулхи государство бюджечĕн расхочĕсем 1950 çулхинчен 28,0 миллиард тенкĕлĕх е 6,8 процент ытларах пулнă.

Халăх хуçалăхне 1950 çулта 157,6 миллиард тенкĕ, 1951 çулта 179,4 миллиард тенкĕ хывнă, социально-культурăллă ĕçсем валли 1950 çулта 116,7 миллиард тенкĕ, 1951 çулта 118,9 миллиард тенкĕ хывнă.

Халăх хуçалăхне аталантармалли плана тата бюджета ăнăçлă тултарнипе Совет государствин финансĕ, кредит системи, укçа-тенкĕ çаврăнăшĕ тата ытлара тĕрекленчĕç.

ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджечĕ

ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджетне халăх хуçалăхне аталантарма çирĕплетнĕ планпа килĕштерсе тунă тата вăл социализмлă производствăна малалла çĕклеме, ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатма тата культурине ўстерме, хамăр Тăван çĕршывăн оборонине çирĕплетме кирлĕ чухлĕ укçа-тенкĕ парса тăрать.

1952 çулта, халăх хуçалăхне аталантармалли план тăрăх, ĕç тухăçлăхне ўстернипе, малта пыракан техникăна пур майсемпе те аталантарса пынипе, производствăсен хăватне çĕнĕрен вăйлатнипе промышленность туса кăларакан продукцие малалла ўстермелле.

Çак çулта ялхуçалăх продукчĕсем туса кăларасси нумай ўсмелле, ăна валли акăнакан лаптăка пысăклатмалла тата тĕштырăсемпе техникăллă культурăсен тухăçлăхне, выльăх йышне тата выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ўстермелле.

1952 çулта халăх хуçалăхĕн пур отраслисенче те строительство ĕçĕсен, уйрăммăнах пурăнмалли çуртсем тумалли ĕçсен пысăк программине пурнăçламалла пулать.

Промышленноçпа ялхуçалăх производстви ўснĕ май тата таварçаврăнăшĕ пысăкланнă май 1952 çулта халăх таварсем илесси ўсет, рабочисен тата служащисен реальнăй ĕç укçи, колхозниксен тупăшĕ тата та ытларах ўсеççĕ.

Халăх хуçалăхне аталантармалли задачăсене пурнăçлас ĕçре социализмлă государство бюджечĕн ролĕ пысăк.

СССР Министрĕсен Совечĕ çирĕплетме тăратнă 1952 çулхи государство бюджечĕ çакăн пек: тупăшсен сумми—508,8 миллиард тенкĕ, расходсен сумми—476,9 миллиард тенкĕ, тупăшсем расходсенчен 31,9 миллиард тенкĕ ытларах пулаççĕ. 1951 çулхипе танлаштарсан, бюджетра тупăшсем 8,7 процент, расходсем 8,1 процент ўсеççĕ.

ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджечĕн хисепĕнче союз бюджетне çакăн пек çирĕплетме тăратнă: тупăшсем енĕпе—410,1 миллиард тенкĕ, расходсем енĕпе—378,2 миллиард тенкĕ.

Союзлă республикăсен государство бюджечĕсем тупăшсемпе расходсем енĕпе 98,7 миллиард тенкĕлĕх пулма палăртса хунă. Республикăсем тăрăх бюджет суммине çакăн чухлĕ палăртнă: РСФСР-ăн—54.716 миллион тенкĕ, Украина ССР-ĕн—17.538 миллион тенкĕ, Белорус ССР-ĕн—3.718 миллион тенкĕ, Узбек ССР-ĕн—3.337 миллион тенкĕ, Казах ССР-ĕн—4.42[illegible] миллион тенкĕ, Грузин ССР-ĕн—2.74[illegible] миллион тенкĕ, Азербайджан ССР-ĕн—1.983 миллион тенкĕ, Литва ССР-ĕн—1.471 миллион тенкĕ, Молдаван ССР-ĕн—1.162 миллион тенкĕ, Латви ССР-ĕн—1.415 миллион тенкĕ, Киргиз ССР-ĕн—1.067 миллион тенкĕ, Таджик ССР-ĕн—1.013 миллион тенкĕ, Армян ССР-ĕн—1.273 миллион тенкĕ, Туркмен ССР-ĕн—983 миллион тенкĕ, Эстони ССР-ĕн—1.059 миллион тенкĕ, Карело-Фин ССР-ĕн—845 миллион тенкĕ.

Союзлă республикăсен бюджечĕсем тăрăх палăртнă укçа-тенкĕ 1952 çулта республикăрипе вырăнти промышленность производствине ўстерме çирĕплетнĕ плана тата строительствăпа социальнăй культурăллă ĕçсен пысăк программине пурнăçлама çителĕклĕ.

ССР Союзĕн государство бюджечĕ тупăшсем енĕпе те, расходсем енĕпе те нумай предприятисен тата учрежденисен ĕçне, пирĕн çĕршыври нумай миллионла халăхăн ĕçне палăртса тăрать.

Совет бюджечĕ республикăсен, крайсен, облаçсен, районсен, хуласен тата ялсен 80 пин бюджечĕсене пĕрлештерсе тăрать. Пирĕн çĕршывра бюджет валли тупăшсем тăвас тата государство укçатенкине расходлас тĕлĕшпе мĕнле те пулин çыхăнса тăман предприятисемпе учрежденисем çук.

Çакă вăл бюджета пурнăçлас тĕлĕшпе союзлă тата автономиллĕ республикăсен Министрĕн Совечĕсем çине, ĕççынни депутачĕсен Совечĕсен исполкомĕсем çине министерствăсемпе ведомствăсен руководителĕсем çине пысăк ответлăх хурать. Вĕсен кашни предприяти тăрăх государство планĕсене хисеп енĕпе те, пахалăх енĕпе те тултарса пымалла, бюджет умĕнче финанс енĕпе илнĕ обязательствăсене пур предприятисемпе организацисем тăрăх вăхăтра пурнăçламалла тăвассишĕн куллен тăрăшмалла, государство панă укçа-тенкĕпе çирĕплетнĕ смета тата финанс планĕ тăрăх кăна усă курмалла.

Государство бюджетне тултарас тĕлĕшпе финанс органĕсем умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ. Финанс органĕсен бюджетра палăртнă тупăшсене вăхăтра тата пĕтĕмпех пухас тĕлĕшпе куллен çине тăрса ĕçлемелле, государство укçа-тенкине тĕрĕс тата перекетлĕ расходланине тăтăшах тата çирĕп тĕрĕслесе тăмалла.

1952 çулхи государство бюджечĕн тупăшĕсем

Депутат юлташсем! Совет бюджетĕнчи тупăшсен тĕп пайĕ социализмлă предприятисемпе организацисенчен пухăнать. ССР Союзĕн халăх хуçалăхĕ, социализмлă анлă воспроизводство законĕсем тăрăх аталанса пыраканскер, бюджетри тупăшсен хисепне пĕрмай ўстерсе пыма май парать.

1952 çулхи государство бюджетĕнчи тупăшсем, ун çинчен сўлерех каларăмăр, 508,8 миллиард тенкĕ пулать, урăхла каласан, 1951 çулхинчен 40,8 миллиард тенкĕ ўсеççĕ. Çак тупăш, пуринчен малтан, социализмлă хуçалăх паракан тупăшсем ўснипе пулать.

Бюджетри тĕп тупăшсен суммине çакăн пек палăртнă: оборотрай илекен налог—260,0 миллиард тенкĕ, усламран уйăрса илни—61,8 миллиард тенкĕ, халăхран пухакан налогсем—47,4 миллиард тенкĕ, государство заемĕсем—42,5 миллиард тенкĕ.

(Малалли 2-мĕш страницăра).

СССР ВЕРХОВНӐЙ СОВЕЧӖН ЛАРӐВӖ

ССР Союзӗн 1952 ҫулхи государство бюджечӗ тата ССР Союзӗн 1950 ҫулхи государство бюджетне пурнӑҫлани ҫинчен

СССР Финанс министрӗ А. Г. ЗВЕРЕВ тунӑ доклад

(Малалли. Пуҫламӑшӗ 1-мӗш страницӑра).

Государство предприятийӗсенчен илекен услам, иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан, 14,0 миллиард тенкӗ таран, урӑхла каласан 29,2 процент ӳсет, оборотран илекен налог 12,2 миллиард тенкӗ е 4,9 процент ӳсет. Бюджетри ҫав тупӑшсен хисепӗ производствӑна малалла вӑйлатнипе, продукцин хӑйне ларакан хакне чакарнипе, ҫапла май социализмлӑ предприятисен накопленийӗ пысӑкланнипе ӳсет.

Халӑх хуҫалӑхӗн отраслисем илекен услам 1952 ҫулта пӗтӗмпе 88,1 миллиард тенкӗ пулать, 1951 ҫулта 74,7 миллиард тенкӗ пулнӑ. Услам ӳсни унӑн пысӑкрах пайне производствӑна аталантарас ӗҫре усӑ курма предприятисемпе министерствӑсен аллинче хӑварма май парать. Ҫав вӑхӑтрах государство бюджечӗ валли усламран уйӑрса илесси ӳсет, государство бюджечӗн тупӑшӗсенче усламӑн хисепӗ 1952 ҫулта 12,2 процент ӳсет, 1951 ҫулта 10,2 процент пулнӑ.

Иртнӗ ҫулта продукцин хӑйне ларакан хакне чакарас тата халӑх хуҫалӑхӗнчи услама ӳстерес тӗлӗшпе паллӑ ҫитӗнӳсем тунӑ. Продукцин хӑйне ларакан хакне чакарнипе государствӑн промышленность предприятийӗсемпе организацийӗсем, чӗр-таварпа материалсен курттӑм сутмалли хакне чакарнипе пулнӑ перекете шута илмесӗр, 26 миллиард тенкӗ ытла перекетленӗ. Пыйӑр промышленноҫӑн отраслисенче продукцин хӑйне ларакан хакне нумай чакарнӑ тата предприятисен тупӑшлӑхне чылай ӳстернӗ.

Ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстернӗ тата продукцин хӑйне ларакан хакне чакарнӑ май Правительство 1952 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗнче производство хатӗрӗсене курттӑм сутмалли хакне тата грузсен тарифне чакарчӗ. Курттӑм сутмалли хака тата тарифсене чакарнине шута илсе, 1952 ҫулта халӑх хуҫалӑхне аталантармалли государство планӗ тӑрӑх, промышленность продукцийӗн хӑйне ларакан хакне малалла чакарма палӑртнӑ, ҫакӑ вӑл 42,9 миллиард тенкӗ перекетлеме май парать.

Производствӑна тӑтӑш ҫӗнӗ техникӑпа пуянлатни тата малта пыракан технологие пурнӑҫлани производствӑна йӗркелессине лайӑхлатни тата кадрсен квалификацийӗ пӗрмай ӳсни ӗҫ тухӑҫлӑхне малалла хӑпартса пыма, ҫак никӗс ҫинче продукцин хӑйне ларакан хакне чакарма пысӑк майсем туса парассӗ.

Продукцин хӑйне ларакан хакне чакарас ӗҫре социализмлӑ ӑмӑртун ҫӗнӗ формисене аталантарни пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать, вӗсем предприятисен ӗҫне лайӑхлатма, производствӑн кашни операцийӗнче чӗр-таварпа материалсене перекетлеме, оборудованипе тулли усӑ курма тата предприятисен техникӑллӑ-экономикӑллӑ кӑтартӑвӗсене пысӑклатма пулӑшассӗ.

Предприяти руководителӗсен, парти тата профсоюз организацийӗсен задачи вӑл — социализмлӑ ӑмӑртӑва тата та анлӑрах сарса пырасси, коммунизмшӑн кӗрешес ӗҫре ҫуралса тухакан ҫӗннине тата малта пыраканнине вӑхӑтра палӑртса сарса пырасси, вӗсене мӗнпур работниксен тивӗҫӗ туса хурасси пулать.

Калас пулать, хӑшпӗр министерствӑсем, предприятисем тата хуҫалӑх организацийӗсем продукцин хӑйне ларакан хакне, тавар ҫаврӑнӑшӗнчи тӑкаксене пӗрмай чакарса пыма тата хуҫалӑхри отрасльсен тупӑшне тӑтӑш ӳстерме пулӑшакан мӗнпур майсемпе тулли усӑ курмассӗ.

ССР Союзӗн Пулӑ промышленноҫӗн министерстви хӑйӗн хуҫалӑхпа финанс ӗҫӗнчи пысӑк ҫитменлӗхсене, СССР Верховнӑй Совечӗн иртнӗ сессийӗнче палӑртнӑ ҫитменлӗхсене ҫав-ҫапах пӗтермен-ха, ҫавӑн пирки иртнӗ ҫулта Главкамчатрыбпром, Главсахалинрыбпром, Главамуррыбпром предприятийӗсем чылай тӑкак тата убыткӑсем тунӑ.

Ҫавӑн пекех СССР Вӑрман промышленность министерствин вӑрман хатӗрлекен Главсеверокомилес, Главвостлес тата Главзапсиблес предприятийӗсем пысӑк убыткӑсем тунӑ.

1951 ҫулта хӑйне ларакан хака йӳнетмелли тата тупӑшсем пухмалли плана Пыйӑр машинӑсем тӑвакан министерствӑпа Машинӑсемпе приборсем тӑвакан министерство тултарман.

Ҫак асӑннӑ министерствӑсен хӑйсен предприятийӗсен хуҫалӑхпа финанс ӗҫӗсен результачӗсенчен тивӗҫлӗ выводсем тумалла тата хуҫалӑх расчетне ҫирӗплетес, продукцин хӑйне ларакан хакне йӳнетес тата тупӑшсем илмелли плана пур предприятисем тӑрӑх та тултарас тӗлӗшпе тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнас пулать.

Хӑйне ларакан хака йӳнетессишӗн кӗрешес ӗҫре нумай предприятисенче чӗр-таварпа материалсене ытлашши тӑккаланине пӗтересси, брак пирки пулакан ҫухатусене тата усӑсӑр расходсене пӗтересси ҫине уйрӑмах тимлӗ пӑхас пулать. СССР Апат-ҫимӗҫ промышленность министерствин Снитакски сахӑр завочӗ пысӑк ҫухатусем тунипе 1951 ҫулта государствӑна 5,5 пин центнер сахӑр туса параймарӗ.

Технологи дисциплинине пӑснӑ пирки Хура металлурги министерствин уйрӑм завочӗсем 1951 ҫулта метала расходламалли нормӑна ӳстернӗ. Ҫӗнӗ Тагиль завочӗн прокат цехӗнче метала 13 миллион тенкӗлӗх ытлашши пӗтернӗ, «Амурсталь» заводра — 5,4 миллион тенкӗлӗх, Челябинск заводӗнче — 8 миллион тенкӗлӗх.

Продукцин хӑйне ларакан хакне малалла йӳнетме пулӑшакан паллӑ условисенчен пӗри вӑл — предприятисенче ӗҫе организацилессине лайӑхлатни тата ӗҫ укҫи фондне перекетлени пулать. Анчах чылай предприятисем ҫакна пурнӑҫласа пымассӗ.

Иртнӗ ҫулта Сясьскри целлюлозӑпа хут комбинатӗнче туман ӗҫсемшӗн закона пӑхӑнмасӑр укҫа тӳленисем, служащисен ӗҫ укҫине ӳстернисем, финанс дисциплинине тата ытти майсемпе пӑснисем пулнӑ. Хутпа йывӑҫ каскалакан промышленность министерстви комбинат ӗҫне лайӑхлатас тата асӑннӑ ҫитменлӗхсене пӗтерес тӗлӗшпе тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнас вырӑнне ӗҫ укҫи фондне ытлашши расходласа пӗтернине саплама прӗк панӑ.

Машинӑсемпе приборсем тӑвакан министерствӑн Главтекстильлегмашӗн Ленинградри машинӑсем тӑвакан завод 1951 ҫулта производство программине тултарман, ӗҫ укҫи тӳлес енӗпе вара 13,5 миллион тенкӗ ытларах расходланӑ.

Министерствӑсемпе ведомствӑсен производство ӗҫне планлассине тата ӗҫе организацилессине лайӑхлатмалла, рабочисен шучӗпе ӗҫ укҫи фондне планран иртерме памалла мар. Ҫак тӗлӗшпе кашни предприяти ӗҫне сӑнаса тӑмалла.

Вак-тӗвек юсав ӗҫӗсем халӑх хуҫалӑхӗнче темиҫе миллиард тенкӗлӗх шутланассӗ. Ҫак ӗҫре перекетлӗх режимне ҫирӗп тытса пымалла.

СССР Финанс министерстви вак-тӗвек юсав ӗҫӗсем валли укҫа-тенкӗ мӗнле расходланине чылай предприятисенче тӗрӗслерӗ, ҫак ӗҫре пысӑк ҫитменлӗхсем пуррине палӑртрӗ.

Чылай предприятисенче планпа пӑхман вак-тӗвек юсав ӗҫӗсем тума укҫа-тенкӗ расходлассӗ. Министерствӑсемпе вӗсен главнӑй управленийӗсем вырӑнсенче вак-тӗвек юсав ӗҫӗсем валли укҫа-тенкӗ мӗнле расходланине ҫителӗксӗр тӗрӗслессӗ. Ҫак ӗҫре тивӗҫлӗ йӗркелӗх тӑвас тӗлӗшпе кирлӗ мерӑсем йышӑнмассӗ.

СССР Министрӗсен Совечӗ министерствӑсене тата тӗп учрежденисене 1952 ҫулта промышленность предприятийӗсенче вак-тӗвек юсав ӗҫӗсем валли укҫа-тенкӗ расходлассине, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, 10 процент таран чакарма хушрӗ. Ана юсав ӗҫӗн хакне йӳнетнипе, ытлашши расходсем тӑвассине пӗтерсе пынипе тумалла.

Перекетлӗхе ӳстерес ӗҫре министерствӑсем предприятисенче уйрӑм изделисен хӑйне ларакан хакне йӳнетсе пырас ӗҫе тӗрӗс планлани пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать.

СССР Министрӗсен Совечӗ нумаях пулмасть йышӑннӑ решенире Йывӑр машиностроени, станкостроени, электропромышленность тата ытти машиностроени министерствисенче промышленность продукцийӗн хӑйне ларакан хакне планлас ӗҫре пысӑк ҫитменлӗхсем пуррине кӑтартса панӑ, ҫак ӗҫе планлас, шута илес тата хатӗр продукцин хӑйне ларнӑ хакне калькуляци тӑвас ӗҫре тивӗҫлӗ йӗрке туса тума хушса хӑварнӑ.

Ҫак министерствӑсен чылай предприятийӗсенче планпа палӑртнӑ калькуляцисенче ӳстерсе кӑтартнисем пулнӑ: чӗр-тавар, материал, электроэнерги тата топливо расходламалли нормӑна ӳстерсе, кирлӗ ӗҫ вӑйне, ӗҫшӗн тӳлессине тата технологи процесне пӑхӑнса ӗҫлемен пирки пулнӑ ӗҫсемшӗн хушса тӳлессине ытларах кӑтартса планланипе материалпа ӗҫ укҫи расходлассине чылай ӳстернӗ.

Министерствӑсен главнӑй управленийӗсем продукцин хӑйне ларакан хакӗн расчечӗсемпе калькуляцине тивӗҫлипе тӗрӗслесе тӑман.

Машиностроени министерствисенче продукцин хӑйне ларакан хакне планлас ӗҫри ҫитменлӗхсем вӗсем ҫавӑн пекех предприятисенче техпромфинплан тӑвас ӗҫӗн пахалӑхӗ ҫине ҫителӗклӗ пӑхманнипе пулма пултарнӑ.

Министерствӑсемпе предприятисен руководителӗсем продукцин хӑйне ларакан хакне планлас, ӗҫ вӑйӗпе материалсен нормисене тӑвас ӗҫри ответлӑха ӳстермелле, цехсемпе заводсенче укҫа-тенкӗне расходланине ҫирӗп тӗрӗслесе тӑмалла.

Продукцин хӑйне ларакан хакне планланӑ чухне тата предприятисенче планлӑ калькуляцисем тунӑ чухне ҫакна шута илмелле: пӗр-пӗр япала тума чӗр-тавар, материал, электроэнерги тата ӗҫ вӑйӗ расходламалли ҫирӗплетнӗ техникӑллӑ-экономикӑллӑ нормӑсене тата оборудованипе усӑ курмалли малта пыракансен нормисене шута илмелле.

Халиччен ҫакӑн пек практика пулнӑ: уйрӑм изделисен хӑйне ларакан хакне палӑртас ӗҫре малтанхи вӑхӑтра пулнӑ мӗнпур расходсене шута илнӗ, ҫав даннӑйсене анализ туман, продукцин хӑйне ларакан хакне йӳнетмелли мероприятисене палӑртман, ҫавӑн пекех тата производствӑн технологи дисциплинине пӑснӑ пирки пулакан тухӑҫсӑр расходсемпе тӑкаксене пӗтерме тӑрӑшман. Ҫакӑн пек практикӑна правительство татӑклӑн сивлерӗ. Вӑл йӗрке продукцин хӑйне ларакан планлӑ хакне ӳстерессе патне илсе пырать.

Министерствӑсен, предприятисемпе хуҫалӑх организацийӗсен руководителӗсен перекетлӗх режимӗшӗн тата та хастарлӑрах кӗрешмелле. Перекетлӗх режимӗ халӑх хуҫалӑхне аталантарса пырас ӗҫре пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Ҫавна май социализмлӑ хуҫалӑха ертсе пырас ӗҫӗн никӗсӗ пулса тӑракан меслете — хуҫалӑх расчетне куллен-кун ҫирӗплетсе пымалла, производствӑн тухӑҫлӑ меслечӗсемпе анлӑрах усӑ курмалла, государство предприятисене уйӑрса паракан материалсемпе тата укҫа-тенкӗпе халичченхинчен лайӑхрах усӑ курмалла.

Ҫак ӗҫре финанс органӗсемпе кредит учрежденийӗсем пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрассӗ. Анчах хӑшпӗр финанс органӗсемпе кредит учрежденисен работникӗсем предприятисемпе организацисен хуҫалӑхпа финанс ӗҫне тивӗҫлипе тӗрӗслесе пымассӗ, предприятисемпе хуҫалӑх организацисен экономикипе финанс ӗҫне тӗпчесе вӗренмессӗ.

Ҫак ӗҫре 1951 ҫулта Киргиз тата Карело-Финн союзлӑ республикӑсен финанс министерствинче пысӑк ҫитменлӗхсем пулнине палӑртнӑ. Ку министерствӑсем уйрӑм предприятисемпе организацисем тӑратакан расчетсемпе отчетсене тимлӗ тӗрӗслемен, финанс дисциплинине ҫирӗплетессишӗн тата государство укҫа-тенкине перекетлӗн расходлассишӗн кӗрешес енӗпе вӗсенчен кирлӗ таран ҫине тӑрса хытӑ ыйтман, ҫирӗп требовани лартман.

СССР Финанс министерствипе финанс органӗсен, Госбанкпа унӑн учрежденийӗсен производствӑри ӗҫсем мӗнле пулса пынине тата тавар ҫаврӑнӑшне кунсерен тӗрӗслесе тӑнипе контроль ӗҫне вӑйлатас пулать. Финанс органӗсемпе кредит учрежденийӗсен продукцин хӑйне ларакан хакне йӳнетес тата тавар ҫаврӑнӑшӗнчи тӑкаксене сахаллатас тӗлӗшпе панӑ заданисене пурнӑҫласа пынине, ӗҫ укҫи фондне расходланине тата предприятисемпе хуҫалӑх организацийӗсем бюджета укҫа-тенкӗ вӑхӑтра тата пӗтӗмпех хывнине хытӑ асӑрхаса тӑмалла.

Бюджетри тупӑшсен пысӑк пайӗ вӑл социализмлӑ хуҫалӑхран кӗрекен укҫа-тенкӗ пулни ҫинчен эпӗ маларах каланӑччӗ ӗнтӗ. ССР Союзӗн 1952 ҫулхи государство бюджечӗ тӑрӑх халӑхран пӗтӗмпе 47,4 миллиард тенкӗ налог пухма палӑртнӑ, ҫав укҫа мӗнпур тупӑшсен хисепӗнче 9,3 процент пулать.

Иртнӗ ҫулталӑкра союзлӑ чылай республикӑсемпе облаҫсен финанс органӗсен халӑхран налог пухас ӗҫӗнче пысӑк ҫитменлӗхсем пулнӑ. Краснодар крайӗнче, Орелпа Брянск облаҫӗсенче тата РСФСР-ти ытти хӑшпӗр облаҫсенче, ҫавӑн пекех Белорус ССР-ӗнчи Гроднӑпа Минск облаҫӗсенче ялхуҫалӑх налогӗсем пухмалли плана срокра тултарман.

Республикӑсемпе облаҫсен финанс органӗсен ялсенче налог хурас, ӑна пухас ӗҫе лайӑхлатмалла. Республикӑсен Министрӗсен Совечӗсемпе ӗҫҫыни депутачӗсен Совечӗсен исполкомӗсен налог хурса, ӑна пухас ӗҫе пурнӑҫлассинче финанс органӗсене пулӑшса пырас пулать.

Халӑх хӑй ирӗкӗпе паракан укҫа-тенкӗ — заемсем, ҫавӑн пекех перекет кассисенчи вкладсем пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрассӗ.

СССР халӑх хуҫалӑхне малалла аталантармалли государство заемне (1951 ҫулхи кӑларӑм) планпа палӑртнинчен 4,8 миллиард тенкӗ ытларах вырнаҫтарнӑ. Колхозниксен тупӑшӗсем пӗрмаях ӳссе пынӑ май, иртнӗ ҫулталӑкра колхозниксем заем нумайрах илме ҫырӑннӑ.

Халӑх хушшинче тата государство организацийӗсем хушшинче сарнӑ государство заемӗсенчен 1952 ҫулта 42,5 миллиард тенкӗ пухма палӑртнӑ. Государство заемӗсем сарнипе пухнӑ укҫа-тенкӗ коммунизмӑн аслӑ стройкисене тӑвас ӗҫе пурнӑҫлама, пирӗн халӑхӑн материальнӑй тата культурӑллӑ пурнӑҫне малашне тата ытларах лайӑхлатма каять.

Перекет кассисем хӑйсен ӗҫӗсене, халӑха хӑйӗн укҫа-тенкине перекет кассисене хуртарас ӗҫе вӑйлатни халӑх пурнӑҫне пӗрмаях лайӑхлатса пыма май парать.

1951 ҫулта перекет кассисенчи вкладсем 4 миллиард тенкӗ чухлӗ ӳснӗ. Перекет кассисене укҫа хывакансен йышне ҫӗнӗрен 3 миллион ҫын ытла хутшӑннӑ. 1952 ҫулхи план тӑрӑх перекет кассисенчи вкладсене татах та 4,5 миллиард тенкӗ чухлӗ ӳстерме йышӑннӑ.

Государство страхованийӗ енӗпе те укҫа-тенкӗ чылай пухма палӑртнӑ. Ку ӗҫ 1951 ҫулта малалла вӑйланса пынӑ. Колхозсем калчӑсемпе выльӑх-чӗрлӗхсене страховани тӑвас ӗҫ лайӑхланнӑ, иртнӗ ҫулта колхозсем ку енӗпе укҫа-тенкӗ нумайрах панӑ, кашни хӑйне ирӗклӗ йӗркепе страховани тӑвасси те анлӑрах сарӑлнӑ.

Анчах государство страховани ӗҫне, уйрӑмах ирӗклӗ йӗркепе страховани тӑвассине нумай лайӑхлатас пулать. Финанс органӗсен, чи малтан страховани енӗпе ӗҫлекен работникӗсен ирӗклӗ страховани ӗҫне анлӑ сармалла тата страховани укҫине пухас ӗҫе вӑйлатмалла.

ССР Союзӗн 1952 ҫулхи государство бюджечӗн расхочӗсем

Депутат юлташсем! Пирӗн социализмлӑ государство хӑйӗн производительнӑй вӑйӗсене историре нихҫан пулман пысӑк хӑвӑртлӑхсемпе малалла аталантарса пырать.

Ҫӗршывӑн производительнӑй вӑйӗсене малалла ӳстерсе пырассинче, обществӑллӑ пуянлӑха пысӑклатассинче тата пурнӑҫа лайӑхлатассинче Сталин юлташ пуҫарнипе тума тытӑннӑ коммунизмӑн аслӑ стройкисем питӗ пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулса тӑрассӗ. (Алӑ ҫупассӗ). Аслӑ стройкӑсенчен пӗрремӗшӗ — Атӑлпа Дон хушшинчи шыв ҫулӗ кӑҫал ӗҫе кӗрет.

Тӗнчери чи пысӑк гидротехника сооруженийӗсене тума, промышленноҫа, ял хуҫалӑхне, транспорта, пурӑнмалли ҫурт-йӗрсем тӑвас ӗҫе, наукӑна, халӑха вӗрентес ӗҫе, сывлӑх ӗҫне малалла аталантарса пыма бюджетран укҫа-тенкӗ нумай памалла пулать, расходсем пысӑк пулассӗ.

ССР Союзӗн 1952 ҫулхи государство бюджетӗнче пӗтӗмпе 476,9 миллиард тенкӗ расходлама палӑртнӑ, ҫав шутран: халӑх хуҫалӑхне аталантарма — 180,4 миллиард тенкӗ, социальнӑй ӗҫсемпе культура ӗҫӗсем валли — 124,8 миллиард тенкӗ, ҫӗршыв оборони валли — 113,8 миллиард тенкӗ, государство управленийӗн органӗсене тытса тӑма — 14,4 миллиард тенкӗ, заемсем тӑрӑх халӑха выляса тухнӑ укҫасене тата процентсене тӳлеме 8,9 миллиард тенкӗ памалла.

1951 ҫулхипе танлаштарсан, кӑҫал бюджетри расходсем 35,6 миллиард тенкӗ е 8,1 процент ытларах пулассӗ.

Асӑннӑ цифрӑсенчен ҫакӑ курӑнать: государство бюджетӗнчи укҫа-тенкӗн пысӑк пайӗ халӑх хуҫалӑхне тата культура ӗҫне каять.

Халӑх хуҫалӑхӗ валли укҫа тенкӗ парасси

Кӑҫал бюджетран халӑх хуҫалӑхне пама палӑртнӑ укҫа-тенкӗрен ҫурри ытла капитальнӑй ӗҫсем тума ҫӗре каять.

Капитальнӑй ӗҫсем тума тата строительствӑри оборотри укҫа-тенкӗсен хисепне ӳстерме 1952 ҫулта 143,1 миллиард тенкӗ, вӑл шутран бюджетран 98,1 миллиард тенкӗ уйӑрса пама палӑртнӑ, предприятисемпе хуҫалӑх организацийӗсем хӑйсем 45 миллиард тенкӗ уйӑрассӗ.

1951 ҫулта строительство организацийӗсем, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, строительство хакне тата строительство срокне чакарнӑ. Анчах Йывӑр промышленность предприятисем тӑвакан министерствӑна, Машиностроени предприятийӗсем тӑвакан министерствӑна, Ҫӗр кӑмрӑк промышленность министерствине, Электростанцисен министерствине, Машиностроенипе приборсем тӑвакан министерствӑна пӑхӑнса тӑракан чылай организацисем, стройкӑсенче ӗҫе кирлӗ пек йӗркелеменнипе, пуян механизмсемпе лайӑх усӑ курманнипе строительство хакне чакармалли государство планне тултарман. Стройкӑсенче техникӑпа тулли усӑ курман, строительство механизмӗсем ахаль тӑнӑ тӗслӗхсем сахал мар. Йывӑр промышленность предприятийӗсем тӑвакан министерствӑна пӑхӑнса тӑракан «Дзержинстрой» трестпа «Макеевстрой» трестра экскаваторсем, крансемпе ытти механизмсем пӑсӑлнипе, планпа палӑртнинчен ытларах юсавра пулнипе тата ӗҫе сарма хатӗрлеменнипе ӗҫсӗр нумай ларнӑ. 1951 ҫулта Кама ҫинче гидроэлектростанци тунӑ ҫӗрте крансемпе, тракторпа ӗҫлекен скреперсем ӗҫ вӑхӑчӗн виҫҫӗмӗш пайӗнчен ытла ахаль ларнӑ. Нумай стройкӑсенче автотранспорт ӗҫне кирлӗ пек йӗркелемен, автомашинӑсем ахаль ларнине е грузсемсӗр, пушӑлла ҫӳренине пӗтермен. Хӑшпӗр организацисем строительство материалӗсемпе ӗҫ укҫи ҫирӗплетнӗ нормӑран ытларах пӗтерессӗ, накладной расходсем ытлашши тӑвассӗ. Машиностроени предприятийӗсем тӑвакан министерствӑна пӑхӑнса тӑракан 5-мӗш трестӑн иккӗмӗш участокӗ 1951 ҫулхи тӑхӑр уйӑхра хӑма — 23 процент, шуҫ тимӗр — 32 процент, известь — 53 процент сметӑри нормӑсенчен ытларах пӗтернӗ. Ҫӗр кӑмрӑк промышленность министерствине пӑхӑнса тӑракан «Красноярскшахтстрой» трестӑн Назаровски строительствӑпа монтаж управленийӗ 1951 ҫулхи 10 уйӑх хушшинче ӗҫ укҫи пӗр миллион тенкӗ яхӑн, строительство материалӗсем — 205.000 тенкӗлӗх сметӑра палӑртнинчен ытларах пӗтернӗ. СССР Строительство материалӗсем тӑвакан промышленность министерствине пӑхӑнса тӑракан трестра, Пашийски цемент завочӗ ларнӑ ҫӗрте, 1951 ҫулхи 9 уйӑх хушшинче накладной расходсем сметӑри нормӑсенчен икӗ хут ытларах пулнӑ.

Министерствӑсемпе ведомствӑсен руководителӗсен строительство хакне чакармалли задание тултарнине тӗрӗслесе тӑмалла. Правительство предприятисемпе ҫуртсене туса пӗтерсе ӗҫе яма ҫирӗплетнӗ срокӗсене тимлӗ пурнӑҫламалла, строительство техникипе лайӑхрах усӑ курмалла, материалсем нормӑран ытлашши пӗтермелле мар, накладной расходсене чакармалла.

Строительство хакне чакармалли задание пурнӑҫласа пынине банксем тӑтӑш тӗрӗслесе тӑмалла. Анчах вӗсем ҫав ответлӑ задачӑна пур чухне те пурнӑҫласа пыраймассӗ. Сӑмахран, промбанкӑн Азербайджан, Узбек, Рязань тата Винница кантурӗсем материалсемпе тата ӗҫ укҫипе мӗнле усӑ курнине, стройкӑсен проекчӗсемпе сметисене кирлӗ пек тӗрӗслесе тӑмассӗ, стройкӑсене финанспа тӳлев дисциплинине ҫирӗплетессишӗн ҫителӗклӗ кӗрешмессӗ.

Халӑх хуҫалӑхне укҫа-тенкӗ нумай ҫуллӑха хывас тӗлӗшпе ӗҫлекен банксен хӑйсен ӗҫне лайӑхлатмалла, строительство мӗнле пынине укҫа-тенкӗ енчен тимлӗ тӗрӗслесе тӑмалла.

1952 ҫулта предприятисемпе хуҫалӑх организацийӗсем оборотри укҫа-тенки, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, 10,7 миллиард тенкӗлӗх ӳсет. Оборотри укҫа-тенкӗ ӳсӗмне производствӑпа тавар ҫаврӑнӑш ӳснине тата продукцин хӑйне ларакан хакне чакармалли задание шута илсе палӑртнӑ. Ҫав вӑхӑтрах 1952 ҫулта халӑх хуҫалӑхӗнче оборотри укҫа-тенкӗн ҫаврӑнӑшне тата хӑвӑртлатмалла тӑвас пулать.

Кӑҫал оборотри укҫа-тенкӗне ӳстерме государство бюджетӗнчен 4,6 миллиард тенкӗ, халӑх хуҫалӑхӗнчи тупӑшран тата хуҫалӑхри ытти ҫӑлкуҫӗсенчен 6,1 миллиард тенкӗ уйӑрса пама палӑртнӑ. 1951 ҫулта предприятисем оборотри укҫа-тенкӗ ӳстерме хӑйсен ресурсӗсенчен 52,6 процент хывнӑ пулсан, 1952 ҫулта вӗсем хӑйсен ресурсӗсенчен 57,2 процент хывассӗ. Ҫакӑ продукцин хӑйне ларакан хакне чакармалли задание тата тупӑш тумалли плана тултарасшӗн, таварсемпе материалсен ҫаврӑнӑшне хӑвӑртлатассишӗн предприятисемпе хуҫалӑх организацисен руководителӗсен ответлӑхне ӳстерет.

Юлашки ҫулсенче халӑх хуҫалӑхӗнче оборотри укҫа-тенкӗпе усӑ курас ӗҫ лайӑхланчӗ. Союзлӑ министерствӑсене пӑхӑнса тӑракан предприятисем 1951 ҫулхи 9 уйӑх хушшинче, 1950 ҫулхи тапхӑрпа танлаштарсан, оборотри таварсемпе материалсен ҫаврӑнӑшне тӑватӑ процент ытла ӳстернӗ. Анчах хӑшпӗр министерствӑсене пӑхӑнса тӑракан предприятисенче оборотри укҫа тенкӗпе усӑ курас ӗҫре пысӑк ҫитменлӗхсем пур-ха, кирлӗ мар тата ытлашши материалсене палӑртас тата сутас ӗҫе йӗркелемен. Планран иртерсе чӗр-тавар материал, топливо тата хатӗр продукци усрассӗ. Планран иртерсе таварсемпе материалсен запасӗсем пулни час-часах продукци пӗр тикӗс туса кӑларманнипе тата хӑшпӗр министерствӑсен снабжени ӗҫӗнчи пысӑк ҫитменлӗхсемпе сыхӑнса тӑрать. Сӑмахран, Автомобильпе трактор промышленность министерствине пӑхӑнса тӑракан Мытищинӑри машинӑсем тӑвакан завод 1951 ҫулта пӗтӗмӗшпе вӑтам шутпа пӗрремӗш вунӑкунлӑхра 18 процент, иккӗмӗш вунӑкунлӑхра — 27,1 процент, виҫҫӗмӗш вунӑкунлӑхра — 54,9 процент продукци туса кӑларнӑ. Завод пӗр тикӗс ӗҫлеменнипе рабочисем нумай ахаль тӑнӑ, оборудованипе лайӑх усӑ курман, таварсемпе материалсем нормӑран ытлашши ӳссе пынӑ. 1952 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗ тӗлне заводра нормӑран ытлашши 11 миллион тенкӗлӗх таварсемпе материалсем пулнӑ.

Министерствӑсен главнӑй управленийӗсемпе снабжени организацийӗсем хӑйсене уйӑрса панӑ фондсене предприятисене тӗрӗс валеҫсе памассӗ, предприятисене материалсем тӑратас тӗлӗшпе пуҫаруллӑ ӗҫлемессӗ.

Строительствӑпа ҫул-йӗр машинисем тӑвакан промышленность министерствине пӑхӑнса тӑракан Выксӑри завода 1951 ҫулхи 9 уйӑхра 2.827 тонна легированнӑй хурҫа листи кирлӗ пулнӑ, ҫав вӑхӑтрах ӑна завода 4.048 тонна кӳрсе килнӗ. Ҫавӑн пекех завода сортлӑ тимӗр, транспортер ленти, моторсемпе дизельсем ытлашши кӳрсе тӑнӑ.

Йывӑр машинӑсем тӑвакан промышленность министерствине пӑхӑнса тӑракан Красноярскри завода 1951 ҫулта главк хушнипе топливо запаса шута илмесӗр кӳрсе тӑнӑ. Ҫавна пула заводра ҫӗр кӑмрӑк запасӗсем нормативра палӑртнинчен чылай ытлашши пулнӑ, нумай ҫӗр кӑмрӑкӗ юрӑхсӑра тухнӑ, усӑсӑр тӑкаксем пулнӑ.

Министерствӑсемпе предприяти руководителӗсен оборотри укҫа-тенкӗпе материалсене планлас тата вӗсемпе усӑ курас, снабжение организацилес тӗлӗшпе ытларах ӗҫлемелле, таварсемпе материалсем ытлашши нумай пулмалла мар тумалла, ҫав материалсене СССР Министрӗсен Совечӗ ҫирӗплетнӗ йӗрке тӑрӑх вӑхӑтра сутмалла. Ҫакӑ вӑл предприятисемпе организацисен хуҫалӑхпа финанс ӗҫне тата лайӑхлатмалли условисем пулса тӑрассӗ.

Финанс органӗсемпе государство банк учрежденийӗсен предприятисемпе организацисен оборотри укҫа-тенки мӗн чухлӗ пуррине, ҫав укҫа-тенкӗпе тата банк кивҫен паракан укҫа-тенкӗпе вӗсем мӗнле усӑ курнине куллен тӗрӗслесе тӑмалла. Анчах ҫакна калас пулать: хӑшпӗр финанспа кредит органӗсем хӑйсен тивӗҫне туллӑ пурнӑҫласа пымассӗ, предприятисемпе организацисем оборотри укҫа-тенкӗпе усӑ курнине ҫителӗксӗр тӗрӗслессӗ.

Вӑл тӗлӗшрен Госбанкӑн Таджик тата Пенза кантурӗсем уйрӑмах юлса пырассӗ. Вӗсем предприятисемпе суту-илӳ организацийӗсенчи нормативран ытлашши таварсемпе материалсене суттарассишӗн кирлӗ пек кӗрешмессӗ, парӑмсене вӑхӑтра тӳленине, финанс дисциплинине сыхланине сӑнаса тӑмассӗ. Финанспа кредит учрежденийӗсенчи работниксен ҫитменлӗхсене пӗтермелле, хӑйсен ӗҫне тӗпрен лайӑхлатмалла.

Государство бюджетӗнчен ялхуҫалӑхӗпе вӑрман хуҫалӑхне, тракторсен, ялхуҫалӑх машинисен тата горючи хакӗ йӳнелнине шута илсе, 1952 ҫулта 34,7 миллиард тенкӗ уйӑрса пама палӑртнӑ. Асӑннӑ суммӑран 17 миллиардне машина-трактор станцийӗсемпе вӑрман тӑрӑхӗсем лартакан станцисене пама палӑртнӑ.

Иртнӗ ҫул вӗҫленес умӗн СССР Министрӗсен Совечӗ ялхуҫалӑхӗн пур отраслӗсене те малалла аталантарас тата ялхуҫалӑх продукчӗсем туса илессине ӳстерес тӗлӗшпе пысӑк вырӑн йышӑнса тӑракан машина-трактор станцийӗсен ӗҫне лайӑхлатмалли мерӑсем ҫинчен решени йышӑнчӗ. Машина-трактор станцийӗсен техникӑпа усӑ курас ӗҫри пысӑк ҫитменлӗхсене пӗтермелле, машинӑсемпе тракторсен тухӑҫлӑхне чылай ӳстермелле, колхозсенче ӗҫсен пахалӑхне лайӑхлатмалла, ҫав ӗҫсене кӗске, агротехника тӗлӗшӗнчен чи лайӑх срокӗсенче туса иртермелле, трактор ӗҫӗсен хӑйне ларакан хакне чакармалли задание тултармалла.

Ялхуҫалӑх производствине малалла аталантарас тӗлӗшрен ҫавӑн пекех совхозсем умӗнче те пысӑк задачӑсем тӑрассӗ. Вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи ҫулсенче совхозсем ялхуҫалӑх продукци туса илессине ӳстерчӗҫ, ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫлӑхне хӑпартрӗҫ, выльӑх-чӗрлӗх йышне тата унӑн тухӑҫлӑхне ӳстерчӗҫ. Ҫав вӑхӑтрах нумай совхозсенче ӗҫ тухӑҫлӑхӗ ҫителӗксӗр-ха, техникӑпа тата материалсен ресурсӗсемпе лайӑх усӑ курмассӗ, материалсемпе тата укҫа-тенкӗпе усӑ курнӑ чухне государство дисциплинине пӑсассӗ, горючи, материал тата ӗҫ укҫи нормӑран иртерсе пӗтерессӗ. Ҫаксем вӗсем совхозсем ялхуҫалӑх культурисемпе выльӑх-чӗрлӗх тухӑҫлӑхне ӳстермелли заданисемпе продукцин хӑйне ларакан хакне чакармалли плана тултарманнин патне илсе пырассӗ. Совхозсен пысӑк задачи вӑл — хуҫалӑхӑн нумай отраслисене аталантарса, продукцин хӑйне ларакан хакне чакарсан, ялхуҫалӑх культурисен тата выльӑх-чӗрлӗх тухӑҫлӑхне ӳстересси, ӗҫ тухӑҫлӑхне хӑпартасси, техникӑпа лайӑхрах усӑ курасси пулать.

(Малалли 3-мӗш страницӑра).

СССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔН ЛАРĂВĔ

ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджечĕ тата ССР Союзĕн 1950 çулхи государство бюджетне пурнăçлани çинчен

СССР Финанс министрĕ А. Г. ЗВЕРЕВ тунă доклад

(Пуçламăшĕ 1-мĕшпе 2-мĕш страницăсенче).

Бюджетран çутçанталăка улăштарса сĕнетмелли сталинла плана пурнăçлама чылай укçа-тенкĕ уйăрса пама палăртнă. 1952 çулта пысăк лаптăк çинче йывăç лартмалла тата мелиораципе çĕре шăвармалли чылай ĕçсем тумалла пулать.

1952 çулта ваккăн сутакан тавар çаврăнăшĕ малалла ÿсет, таварсен ассортиментне пысăкланать, вĕсен пахалăхĕ лайăхланать. Суту-илÿ организацийĕсен руководителĕсем таварсене вăхăтра йăсатас, вĕсен пахалăхне лайăхлатас, ассортиментне сарас тĕлĕшпе предприятисемпе базăсем умне чылай чухне кирлĕ пек требованисем кăларса тăратмаççĕ, уйрăм йышши таварсем туса кăларма промышленность предприятийĕсене заказ памалли йĕркепе çителĕксĕр усă кураççĕ, вырăнта туса кăларакан таварсене туянма кирлĕ пек тăрăшмаççĕ.

СССР Суту-илÿ министерствипе унăн вырăнти органĕсем тавар çаврăнăш планне халăх мĕнле йышши япаласем туянассине шута илмесĕр тăваççĕ, суту-илÿ организацийĕсем уйăрса панă фондсем тăрăх таварсем вăхăтра кÿрсе килме тăрăшмаççĕ. Час-часах таварсене вăхăтне кура ыйтманнине шута илмесĕр кÿрсе килеççĕ. Уйрăм хуласемпе районсенче суту-илÿ организацийĕсен склачĕсенче ытлашши выртакан таварсене те таттисыпписĕр сутмаççĕ.

Суту-илÿ организацийĕсем умĕнче потребительсен ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçе лайăхлатас, таварсен фончĕсемпе тулли усă курас, промышленноçа продукци пахалăхне хăпартас, унăн ассортиментне сарас тĕлĕшпе активлăрах хистесе тăрас, финанспа хуçалăх ĕçне лайăхлатас задача тăрать.

Социальнăй ĕççемпе культура ĕçĕсем валли тухакан расходсем

Социализмлă культурăна малалла аталантарса пырасси пирĕн государствăн пысăк задачисенчен пĕри пулса тăрать. Ленин—Сталин партийĕ совет халăхĕн аталанулăхĕ ÿсни, унăн культурипе идейăллă шайĕ пĕрмаях ÿссе пыни Совет государстви вăйĕсен хăватлă çăлкуçĕ, эпир коммунизм çулĕпе малалла каяссинче питĕ кирлĕ условии пулса тăрать тесе шутлать.

Совет правительстви хамăр çĕршыври ĕççыннисене пур енĕпе те пĕлÿсем пама тата вĕрентсе воспитани пама уйрăмах питĕ тимлĕ тăрăшать.

Вăрçă умĕнхи вăхăтрах пур ачасене те çичĕ çул вĕрентес задачăна йăнăçлă татса панăччĕ, Совет государстви хальхи вăхăтра пур çĕрте те ачасене çичĕ çул вĕрентмелли йĕркене пурнăçласа пырать, ачасене вунă çул вĕрентес ĕçе пур майсемпе те малалла аталантарма тăрăшать.

1952 çулта аслă шкулсенче 1.416 пин студент е иртнĕ çулхинчен 60 пин çын ытларах вĕренмелле. Техникумсенче вĕренекенсен йышĕ 57 пин çын хутшăнать, техникумсенче пĕтĕмпе 1.441 пин çын вĕренмелле пулать.

Советлă обществăллă строй чăн-чăн наукăна аталантарма калама çук пысăк майсем туса пачĕ. Чăн-чăн наука çинчен Сталин юлташ çапла калать: вăл «...халăхран уйрăлса тăмасть, халăха хăйĕнчен аякра тытмасть, вăл халăх ĕçне туса тăма хатĕр, наукăн мĕнпур çĕнтерĕвĕсене халăха пама хатĕр, вăл халăх ĕçне ирĕксĕрленипе мар, ирĕклĕн, хăй килĕшнипе туса тăрать».

1952 çулхи планра çутçанталăк вăйĕсемпе этемлĕхĕн пурнăçне лайăхлатма, ĕçе çăмăллатма тата ĕç тухăçлăхне ÿстерме усă курас ыйтăвĕсене тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе ĕçлекен наукăпа тĕпчев учрежденийĕсен ĕçне малалла лайăхлатса пыма палăртнă.

Кăçал халăха вĕрентес ĕç валли—60 миллиард тенкĕ, сывлăха сыхлас ĕçпе физкультура валли—22,8 миллиард тенкĕ, социальнăй страхованипе социальнăй обеспечени валли—37,5 миллиард тенкĕ, нумай ачаллă ача амăшĕсене тата пĕччен ача амăшĕсене государство пособийĕ пĕтĕмпе 4,5 миллиард тенкĕ памалла.

Çак цифрăсем Совет правительствипе Сталин юлташ халăхăн анлă сийĕсен материальнăй пурнăçне лайăхлатассишĕн тата вĕсен культурине ÿстерессишĕн кунçерен тăрăшса пынине уççăнах кăтартса параççĕ. **(Алă çупаççĕ).**

Правительство совет аппарачĕн ĕçне лайăхлатма тата йĕркелесе çитерме хытă тăрăшать. Юлашки çулсенче государство аппарачĕн структурине лайăхрах йĕркелесе, вĕсене пĕчĕклетес тĕлĕшпе пысăк ĕç тунă. Çакă вара аппарат ĕçне чылай лайăхлатнă, ăна тытса тăма тухакан расходсене сахаллатнă. Çапах та государство учрежденийĕсемпе предприятийĕсенче штатпа пăхнинчен ытлашши çынсем тытнипе тата штатпа смета дисциплинине пăснипе пĕтĕмпех пĕтереймен-ха. 1951 çулта финанс органĕсем вăрман промышленноçĕн, аш-какайпа сĕт-çу, автомобильпе трактор промышленноçĕсен тата çул-йĕр министерствисен чылай предприятийĕсенче, çавăн пекех ытти хăшпĕр предприятисенче çирĕплетнĕ штатсене пăснисем пуррине палăртнă.

Государствăн штатнăй комиссийĕн государство аппаратĕнчи штатсенчен иртерсе çынсем тытнине пĕтерес, государство аппарачĕн структурине лайăхлатас тĕлĕшпе тата тимлĕрех ĕçлес пулать. Финанс органĕсен çирĕплетнĕ штатсемпе сметăсене пурнăçласа пынине тĕрĕслесе тăрас ĕçе вăйлатмалла. Финанс органĕсен, министерствăсен тата ведомствăсен контрольпе ревизи ĕçĕн пахалăхне лайăхлатса пымалла тата контрольпе ревизи ĕçĕн витĕмлĕхне ÿстермелле.

Контролер-ревизорсен тĕрĕслевĕ чухне финанс дисциплинине пăснине палăртмалла çеç мар, вĕсен—çав çитменлĕхсене пĕтĕмпех пĕтерме тăрăшас пулать.

Совет государствин оборонине тĕреклетме каякан расходсем

Совет Союзĕ пĕрмаях мирлĕ политика тытса пырать, халăхсем хушшинчи мирпе туслăхшăн кĕрешекенсен малти ретĕнче тăрать. Совет Союзĕ мирлĕ политика тытса пыни Совет государстви хăй мĕнле пулнинчен, советлă обществăллă стройăн тĕп тата принципиальнăй никĕсĕсем мĕнле пулнинчен тата пирĕн халăхăн пурнăçри интересĕсем мĕнле пулнинчен килет.

«Совет государстви хăватлă пулнине кăна мар, унăн мĕнпур халăхсем пĕр çын правăллă пулмаллине йышăнни çинче, вĕсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хисеплени çинче никĕсленсе тăракан политики тĕрĕс пулнине пĕтĕм тĕнче пĕлсе çитме пултарчĕ,—тет Сталин юлташ.—Совет Союзĕ малашне те хăйĕн политикине—мирпе хăрушсăрлăх политикине, халăхсем çĕр тан правăллă пулмалли тата туслă пурăнмалли политикăна çирĕп тытса пырас пирки иккĕленме нимĕнле сăлтав та çук».

Совет государстви тытса пыракан мирлĕ политика хамăр çĕршывăн никам çĕмĕрейми вăй-хăвачĕ çинче таянса тă-рать. Политика ĕçĕнчи малашлăха курса тăман деятельсем тата Совет государствин хаяр тăшманĕсем кăна çав мире юратас политикăна урăхла хаклама, совет халăхĕ хăйĕн вăйĕсене шанман пирки çавăн пек политика тытса пырать, тесе калама пултараççĕ. Совет государстви миршĕн çине тăрса кĕрешет, мĕншĕн тесен ăна вăрçă кирлĕ мар, мĕншĕн тесен совет халăхĕ агрессиллĕ вăрçа этемлĕх умĕнче чи пысăк преступлени туни тесе шутлать.

Пултарулă мирлĕ ĕçре ĕçлесе пурăнакан совет çыннисем империалистла агрессорсен ирсĕр хăтланăвĕсене хытă асăрхаса тăраççĕ. «Паллах, агрессорсем хăйсем Совет Союзĕ çине тапăнсан, вăл хĕçпăшалсăр пулассине кĕтеççĕ,—тет Сталин юлташ.—Анчах Совет Союзĕ çавăнпа килĕшмест, вăл агрессорсене вăйлă хĕçпăшалланнипе кĕтсе илме кирлĕ тесе шутлать» **(нумайччен тăвăллă алă çупаççĕ).**

США, Англи, Франци тата ытти агрессиллĕ государствăсен влаçра тăракан ушкăнĕсем тĕнчери çĕнĕ вăрçа хатĕрленес тĕлĕшпе хытă тăрăшаççĕ. Вĕсем çав тĕллевпе пурнăçлама укçа нумай уйăрса параççĕ. Вăрçа хатĕрлеме тата васкасах нумай хĕçпăшал хатĕрлеме çав çĕршывсен государство бюджечĕсен пысăк пайĕ каять.

США-н çар расхочĕсем, официальнăй сведенисем тăрăх та, юлашки çулталăкра виçĕ хут ытла ÿснĕ, çар расхочĕсем хальхи вăхăтра США государство бюджетĕнче 80 процентран та иртеççĕ. Англи, Франци тата ытти агрессиллĕ государствăсен çар расхочĕсем те юлашки çулсенче питĕ нумай ÿснĕ.

США-н влаçра тăракан ушкăнĕсем агрессиллĕ империалистла политика тытса пыни США президенчĕ нумай пулмасть 1952—1953 бюджет çулĕнчи бюджет пирки конгреса янă çыруран лайăх курăнса тăрать. Анчах Трумэн питĕ мухтанса тата паттăрланса каласа пани США-н влаçра тăракан ушкăнĕсем шикленсе ÿкнине пытарса тăма пултараймасть, вĕсем хăйсен политики пирки Америка халăхĕ хушшинче кăмăлсăрлăх ÿснĕ тата империалистла лагерьте пĕрпĕринпе хирĕçесси вăйланса пынă пирки шикленсе ÿкнĕ.

Агрессиллĕ империалистла государствăсем çавăн пек политика тытса пыраççĕ пулсан, Совет Союзĕ пачах урăхла тăвать, хăйĕн государство бюджетĕнчи укçа-тенкĕн пысăк пайне, иртнĕ çулсенчи пекех, халăх хуçалăхне вăйлатма, ĕççыннисен материальнăй пурнăçĕпе культурăллă пурнăçне лайăхлатма расходлать. 1952 çулта çĕршыв оборони валли 113,8 миллиард тенкĕ е государство бюджетĕнчи расходсен 23,9 процентне пама палăртнă. Çак укçа-тенкĕ Тăван çĕршывăн оборонине малалла тĕреклетсе пырас тĕлĕшпе тума палăртнă ĕççене пурнăçлама май парать.

Совет Союзĕн нимĕнле агрессиллĕ план та çук. Вăл нимĕнле çĕршывсене те, нимĕнле халăхсене те юнаса хăратмасть. Унăн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем ниçта та вăрçмаççĕ, нимĕнле çар операцийĕсене те хутшăнман. Совет Союзĕнче мире сыхласа хăварасси çинчен кăларнă закона, халăхсем хушшинчи мирпе туслăха тĕреклетме пулăшакан закона пурнăçлаççĕ.

Совет Союзĕ ертсе пыракан мирпе демократи лагерĕ империалистсен вăрçă пуçарма хĕтĕртекенĕсен çулĕ çинче нимĕнле иртсе кайма çук чăрмав пулса тăрать. Çак лагерĕн вăйĕсем кунтан-кун ÿссе тата тĕрекленсе пыраççĕ. Миршĕн кĕрешес юхăм хальхи кунсенчи чи пысăк юхăмсенчен пĕри, ку чухнехи хăватлă, никам çĕнтерейми вăй пулса тăрать. Çак аслă юхăм мĕнпур çĕршывсенчи тÿрĕ кăмăллă миллионшар çынсем мир ĕçне хÿтĕлесе хăварма тата вăрçа сирсе яма çирĕп шухăш тытни çинче никĕсленсе тăрать.

* * *

Депутат юлташсем! Коммунизм тумалли сталинла программа хавхалантарнипе совет халăхĕ пултарулă мирлĕ ĕçре хăйне хĕрхенмесĕр тата паттăр ĕçлет. Большевиксен партийĕ ертсе пыракан совет халăхĕ коммунизм строительствин задачисене ăнăçлă пурнăçласа пырать.

ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджечĕ, СССР Министрĕсен Совечĕ сессире çирĕплетме тăратнăскер, партипе правительство халăх хуçалăхне малалла аталантарас, совет халăхĕн пурнăçне лайăхлатас тата культурине ÿстерес енĕпе тума палăртнă мĕнпур ĕççене пурнăçлама çителĕклĕ укçа парса тăма май кÿрет.

Умра тăракан задачăсем: çак бюджета вăхăтра пурнăçласа пымалла, хуçалăхри резервсене пĕтĕмпех мобилизацилемелле, государство укçа-тенкине перекетлĕн расходламалла, финанспа кредита тата ытларах тĕреклетмелле, совет укçин хакне малалла çирĕплетсе пымалла. Государство бюджетне ăнăçлă пурнăçлани Совет государствин экономикăллă вăй-хăватне ÿстерес тĕлĕшпе тунă çĕнĕ пысăк ĕç пулĕ.

Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем, большевиксен партийĕ тавра тачă пĕтĕçсе, халăх хуçалăх планне тата государство бюджетне ăнăçлă пурнăçлама пур майсемпе те тăрăшĕç, коммунизм обществи тăвас ĕçре 1952 çулта çĕнĕ çĕнтерÿсем тунипе палăртĕç. Çав тĕллев патне пире Ленинпа Сталинăн аслă партийĕ, юратнă çулпуçăмăрпа учителĕмĕр Сталин юлташ шанчăклăн илсе пырать! **(Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ. Пурте ура çине тăраççĕ. Кремльти дворецра И. В. Сталин юлташа хисеплесе алă çупни нумайччен илтĕнет).**

Кремльти дворецăн Пысăк залĕнче

Мартăн 6-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре, Кремльти дворецăн Пысăк залĕнче Союз Совечĕпе Национальноçсен Совечĕн пĕрлехи ларăвĕ пулнă.

Председатель сĕтелĕ хушшинче—Союз Совечĕн председателĕ **М. А. Яснов** депутат, Национальноçсен Совечĕн председателĕ **Ж. Шаяхметов** депутат, палатăсен председателĕсен заместителĕсем: **А. И. Кириченко, Т. М. Зуева, А. И. Ниязов, М. Т. Якубов, В. Т. Лацис, Т. М. Матиашвили** депутатсем.

Правительство ложисене **В. М. Молотов, Г. М. Маленков, Л. П. Берия, К. Е. Ворошилов, А. И. Микоян, Н. А. Булганин, Л. М. Каганович, А. А. Андреев, Н. С. Хрущев, А. Н. Косыгин, Н. М. Шверник, М. А. Суслов, П. К. Пономаренко, М. Ф. Шкирятов** юлташсем тухаççĕ.

Депутатсемпе хănасем, ура çине тăрса, партипе правительствăн руководителĕсене нумайччен алă çупса саламлаççĕ.

Правительство ложисенче—СССР Верховнăй Совет Президиумĕн членĕсемпе министрсем.

Хăнасен ложисенче—урăх çĕршывсен Мускаври посольствисемпе миссисен пуçлăхĕсем, Совет Союзĕнчи тата урăх çĕршывсенчи журналистсем.

Лару председателĕ **М. А. Яснов** депутат Союз Совечĕпе Национальноçсен Совечĕн пĕрлехи ларăвĕ уçăлни çинчен пĕлтерет.

ССР Союзĕн 1952 çулхи государство бюджечĕ çинчен тата ССР Союзĕн 1950 çулхи государство бюджетне пурнăçлани çинчен доклад тума СССР Финанс министрне **А. Г. Зверев** юлташа сăмах параççĕ.

Докладчик совет халăхĕ хуçалăхпа культура строительствинче, коммунизмăн материально-техникăллă базине тăвассишĕн кĕрешес ĕçре тунă пысăк çитĕнÿсем çинчен калать.

Докладчик Сталин юлташăн çак сăмахĕсене каласан: залра çынсем тăвăллăн алă çупаççĕ: «Паллах, агрессорсем, хăйсем Совет Союзĕ çине тапăнсан, вăл хĕçпăшалсăр пулассине кĕтеççĕ. Анчах Совет Союзĕ çавăнпа килĕшмест, вăл агрессорсене вăйлă хĕçпăшалланнипе кĕтсе илме кирлĕ тесе шутлать».

Государство бюджетне ăнăçлăн тултарни Совет государствин экономикăллă вăй-хăватне ÿстерес тĕлĕшпе тунă çĕнĕ пысăк ĕç пулĕ, — тет юлашкинчен Зверев юлташ,—Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем, большевиксен партийĕ тавра тачă пĕтĕçсе, халăх хуçалăх планне ăнăçлăн тултарма тата государство бюджетне тултарма мĕн кирлине те пĕтĕмĕшпех тăвĕç, 1952 çулă коммунизм обществи тăвас ĕçре çĕнĕ çĕнтерÿсем тунипе палăртĕç. Çак тĕллев патне пире Ленин—Сталин аслă партийĕ, юратнă çулпуçăмăрпа учителĕмĕр Сталин юлташ шанчăклăн ертсе пырассĕ.

Нумайччен тăвăллăн алă çупни янăраса тăрать. Пурте тăраççĕ. Кремль дворецĕн залĕнче И. В. Сталин юлташа хисеплесе тăвăллăн алă çупни нумай вăхăт хушши чарăнмасть.

Сакăнпа Союз Совечĕпе Национальноçсен Совечĕн пĕрлехи ларăвĕ хупăнать.

Совет хĕрарăмĕсем—коммунизм тăвассишĕн активлă кĕрешекенсем

Е. ЛЕОНТЬЕВА,
РСФСР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи культурăпа çутĕç учрежденийĕсен комитечĕн председателĕ

Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунне — Мартăн 8-мĕшне совет халăхĕ кăçал пирĕн çĕршывра коммунизм тăвассишĕн кĕрешсе çав тери пысăк çĕнтерÿсем тунă условисенче, пĕтĕм тĕнчере мире хÿтĕлесе хăварассишĕн, халăхсем хушшинчи туслăхпа килĕштерсе ĕçлессине çирĕплетессишĕн кĕрешÿ сарăлнăçем сарăлса пынă условисенче палăртать.

Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе пирĕн çĕршыври ĕççыннисем СССР халăх хуçалăхне аталантармалли 1951 çулхи государство планне ăнăçлă тултарчĕç, хуçалăхпа культура строительствинче пур енĕпе те çĕнĕ çĕнтерÿсем турĕç. Çак çĕнтерÿсене социализмлă строй капитализмлă стройран калама çук малта тăнипе тата унтан вăйлăрах пулнипе тунă. Ленин—Сталин партийĕ хавхалантарса пынипе, совет халăхĕ коммунизм тумалли аслă программăна çав тери пысăк хастарлăхпа пурнăçа кĕртсе пырать. Пирĕн Тăван çĕршывăн пур çитĕнĕвĕсенче те совет хĕрарăмĕсем—социализм çĕршывĕн хĕрÿллĕ патриочĕсем, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн активлă кĕрешекенсем—пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

* * *

Ленинпа Сталин ĕç хĕрарăмĕсене коммунизм тума активлă хутшăнтарас ĕçе яланах пысăк вырăна хунă. Совет влаçĕн малтанхи тапхăрĕнчех Владимир Ильич çапла каланă:

«Совет влаçĕ пуçланă ĕçе пĕтĕм Российăпе çĕршер хĕрарăм вырăнне миллионшар та миллионшар хĕрарăм çак ĕçе хутшăнсан кăна малалла яма пулать. Вара социализм тăвас ĕç çирĕп пуласса эпир шансах тăратпăр. Вара ĕççыннисем помещиксемпе капиталистсемсĕрех пурăнма тата хуçа пулма пултарнине кăтартса парĕç. Вара Российăра социализм тăвас ĕç çирĕп тăрĕ, ытти çĕршывсенчи тата Российăри хăйĕнчи нимĕнле тăшмансем те Совет республикишĕн хăрушă пулмĕç».

Большевиксен партийĕпе Совет правительстви совет хĕрарăмĕн творчествăллă пултарулăхне аталантарма калама çук пысăк майсем пачĕç, совет хĕрарăмне капитализмлă çĕршывсенчи хĕрарăмсем нихçан çитес çук хисепе çĕклерĕç. Совет Союзĕнчи хĕрарăмсем пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле совет государствин тулли влаçлă хуçисем, коммунизмăн активлă строителĕсем пулса тăраççĕ.

Совет хĕрарăмĕсем государствăна тытса пырас ĕçе çултан-çул ытларах хутшăнаççĕ. СССР Верховнăй Совечĕн пĕррремĕш созывĕнче 187 хĕрарăм-депутат, иккĕмĕш созывĕнче—277, виççĕмĕш созывĕнче — 280 хĕрарăм-депутат пулнă. Союзлă тата автономиллĕ республикăсен Верховнăй Совечĕсене хĕрарăмсенчен икĕ пин çынна ытла, ĕççынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсене—вара çур миллион ытла çынна суйланă.

Миллионшар хĕрарăмсем парти, профсоюз тата ытти обществăллă организацисенче суйласа лартнă ĕçсенче ĕçлеççĕ, халăх хуçалăхĕн тĕрлĕ отраслĕсенче администрацийĕ хуçалăх ĕçне туса пыраççĕ.

Пирĕн çĕршывра хĕрарăмсем коммунизм строительствинчи аслă вăй пулса тăчĕç. Миллионшар мухтавлă патриоткăсем промышленность предприятийĕсенче, транспорт çинче, çĕнĕ стройкăсенче хастарлă ĕçлеççĕ. Вĕсенчен нумайăшĕ пысăк квалификаци илнĕ, халĕ вĕсем ĕлĕкренех арçын ĕçĕ тесе шутланă ĕççенче те ăнăçлăн ĕçлеççĕ. Арçынпа пĕр тан ĕçленĕшĕн хĕрарăма сахалтарах тÿлес йĕркене ĕмĕрлĕхех пĕтернĕ.

Совет хĕрарăмĕсем, партипе правительство тата Сталин юлташ вĕсемшĕн куллен тăрăшнипе хавхаланса, производствăра çав тери пысăк пуçарулăх кăтартаççĕ, социализмлă промышленноçри пултарулă новаторсем пулса тăраççĕ.

Мускаври «Буревестник» атă-пушмак фабрикинче ĕçлекен Мария Левченко стахановкăна темиçе уйăх каярах цехри юлташĕсем кăна пĕлнĕ. Анчах çамрăк патриотка, халăх пурлăхне упрас тата ÿстерсе пырас ырă ĕмĕтпе хавхаланса, хăйĕн юлташĕпе—Григорий Мухановпа пĕрле производствăри кашни операцире продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетессишĕн ăмăрту пуçлама сĕнÿ панă. Парти организацийĕ тата хозяйственниксем новаторсен хаклă пуçарăвне хĕрÿ ырланă. Халĕ Левченкăпа Муханов пек ĕçлекенсем Совет Союзĕнче кăна мар, халăх демократи çĕршывĕсенче те нумай.

М. Левченкăпа Г. Муханов сĕнĕвне чи малтан Люблинăри литейно-механически заводра ĕçлекен çамрăк стахановкăсем Антонина Жандаровăпа Ольга Агафонова йышăннă. Çакăнпа пĕрлех вĕсем хăйсем умне тата çакăн пек задача лартнă: производствăри кашни операцие чи лайăх пахалăхпа кăна тумалла. Çапла ĕçлесен кăна производствăри тăкаксене чакарма тата пысăк пахалăхлă продукци туса кăларма пулать. А. Жандаровăпа О. Агафонова ĕçлекен токарь станокĕ патĕнчен çак çĕнĕ пуçару пĕтĕм çĕршывĕпех сарăлчĕ.

Коммунизмăн аслă стройкисенче совет хĕрарăмĕсем ĕçри паттăрлăх тĕслĕхĕсене кăтартса параççĕ.

Атăл-Дон каналĕн 13-мĕш шлюзне тунă çĕрте ĕçлекен чи лайăх десятник Евдокия Колесникова нумаях та пулмасть ахаль строитель çеç пулнă. Халĕ вăл строительсен тăватă бригадине ертсе пырать. Е. Колесникова участокĕ строительствăра чи малта пырать: бригадăсем пур ĕççене те срокчен тата пысăк пахалăхпа тăваççĕ. *Мария Болдырева нумаях та пулмасть* Ростов облаçĕнчи Покровский ялĕнчи колхозница пулнă, халĕ вăл Цимлянски гидроузел строительствинчи чи лайăх электросварщицăсенчен пĕри.

Производство планĕсене тултарма тата иртерсе тултарма, ĕç тухăçлăхне ÿстерме чĕнсе, парти промышленноçра ĕçлекен хĕрарăмсен активлăхне ÿстерсе пырать.

Парти хĕрарăмсене—работницăсене, инженерсемпе техниксене техникăна лайăх пĕлме, продукци пахалăхне лайăхлатса тата хăйне ларакан хакне йÿнетсе пыма, производствăпа строительствăра çав тери перекетлĕ пулма чĕнет.

Ялхуçалăхĕнче колхоз стройĕ çĕнтернине пула хресчен хĕрарăмĕсем ирĕклĕ обществăллă ĕçе хутшăнчĕç, экономика енчен арçынпа чăн-чăн пĕртанлăх илчĕç, вĕсене политикăпа культура тĕлĕшĕнчен ÿсме нихçанхинчен лайăх условисем туса панă.

1935 çулта, партипе правительство руководителĕсем колхозница-пятисотницăсене йышăннă чухне, Сталин юлташ çапла каларĕ: «Колхозлă пурнăç кăна ĕçе хисеплĕ вырăна тăратма пултарчĕ, вăл кăна чăн-чăн героиньăсене—ялти хĕрарăмсене палăртма май пачĕ. Колхозлă пурнăç кăна танмарлăха пĕтерсе, хĕрарăма ура çине тăратма пултарчĕ».

Колхозницăсем социализмлă çĕрĕçĕн культурине малалла çĕклессишĕн активлă кĕрешеççĕ. Вуншар пин хĕрарăмсем колхозсенче ертсе пыракан вырăнсенче, ялхуçалăх специалисчĕсем пулса ĕçлеççĕ.

Совет хĕрарăмĕсем тирпейлĕ хуçасем, колхоз производствине лайăх ертсе пыракансем пулнине кăтартса пачĕç. Уй-хир ĕçĕпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракан мичуринла наука вĕрентĕвĕпе усă курас, ялхуçалăхĕн техникăлла никĕсне çирĕплетсе, малалла аталантарас тĕлĕшпе те хĕрарăмсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Кострома облаçĕнчи Социализмлă Ĕç Геройĕ П. А. Малинина ертсе пыракан «XII Октябрь» колхозăн пысăк çитĕнĕвĕсем çинчен пирĕн Тăван çĕршыв чиккисен леш енче те пĕлеççĕ. Çак колхозăн уй-хирĕсенче иртнĕ çул вăйлă тырпул туса илнĕ. Ăратлă выльăх-чĕрлĕх фермине 1951 çулта 10 уйăх хушшинче кашни ĕнерен 4.420 килограмм сĕт суса илнĕ. Уй-хирпе выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли государство планне колхоз срокчен тултарнă. Артель обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртнĕ. Колхоз фермисенче продуктивлă ĕне выльăх нумай, вĕсем пурте лайăх ăратлă. Фермăсене пурне те механизациленĕ.

Иртнĕ çул колхоз миллион та виççĕр пин тенкĕ тупăш илнĕ. Ĕçре пысăк çитĕнÿсем тунăшăн артельти 13 колхознике Социализмлă Ĕç Геройĕ ятне панă. 180 çынна орденсемпе медальсем парса наградăланă.

— Эпир сирĕнпе илемлĕ те телейлĕ пурнăçпа пурăнатпăр, çакăн çинчен эпĕ ĕлĕк шухăшлама та, ĕмĕтленме те пултарайман,—тет Малинина юлташ.—Эпĕ чухăн çемьере çуралнă, аттепе анне хăйсен ĕмĕрне тарçăрах иртерне, эпĕ хам ултă çултах ют çынсен ачисене пăхма кайнă. Совет влаçĕ кăна пире аслă çул уçса пачĕ.

Азербайджанра çĕр мамăкĕ туса илес ĕçре мала тухнă Социализмлă Ĕç Геройĕсене: Басти Багировăна — Касум-Исмаиловски районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри звеньевоя, Шамама Гасановăна—Карячински районĕнчи «Майăн 1-мĕшĕ» колхозри звеньевоя иккĕмĕш хут «Çурлапа Мăлатук» ылтăн медаль парса наградăланă.

Колхозницăсем ялхуçалăхĕ умĕнче тăракан тĕп задачăна пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешеççĕ. Вĕсем пур ялхуçалăх культурисен тухăçне те хăпартма, обществăллă выльăх-чĕрлĕхĕн хисепĕпе продуктивлăхне хăвăрт ÿстерсе пыма, çутçанталăка урăхлатса сĕнетмелли сталинла плана пурнăçа кĕртме, пирĕн çĕршывра апат-çимĕç тата промышленность валли чĕртавар çав тери нумай туса тăма çине тăрса ĕçлеççĕ.

* * *

Совет хĕрарăмĕсем наукăпа культурăра та çав тери пысăк çитĕнÿсем турĕç. Патша Российинче аслă шкултан вĕренсе тухнă хĕрарăмсем пĕрерĕн çеç шутланнă. Совет стройĕ хĕрарăмсем валли вăтам шкулсемпе аслă шкулсен алăкĕсене сарлакан уçса пачĕ.

Аслă шкултан вĕренсе тухнă специалистсем хушшинче халĕ хĕрарăмсем çурри ытла, хăшпĕр специалистсем тăрăх (врачсем, педагогсем)—çурринчен нумай ытларах. Пирĕн çĕршывра хĕрарăм-инженерсем, агрономсем тата халăх хуçалăхĕн ытти специалисчĕсем çĕршер пин шутланаççĕ. Вăрçă вăхăтĕнче тата вăрçă хыççăнхи çулсенче наука работникĕсем хушшинче хĕрарăмсен хисепĕ икĕ хут ÿсрĕ. СССР Наукăсен Академийĕн наука работникĕсенчен 37 проценчĕ хĕрарăмсем. Вуншар пин хĕрарăм совет наукинче ĕçлесе, унăн мухтавне çĕклеççĕ.

Ольга Борисовна Лепешинская профессор тунă открыти пĕтĕм тĕнчипе паллă вырăнта тăрать, вăл биолог-метафизиксем (Вирхов т. ыт. те) клеткăсем ытти клеткăсенчен çеç пулма *пултараççĕ тенине* сирсе ячĕ. О. Б. Лепешинская çĕнĕ клеткăсем организмра структурăсăр, чĕрĕ япаласенчен пулма пултарнине, çавнашкалах пурнăçăн клеткăсăр формисем çав тери пысăк вырăнта тăнине кăтартса пачĕ.

Нумай хĕрарăмсем литературăпа искусствăра ĕçлеççĕ, пысăк идейăллă, илемлĕ произведенисем çыраççĕ.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви совет хĕрарăмĕсен паттăр ĕçне пысăк хак параççĕ. Çĕршер пин хĕрарăма ССР Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене парса наградăланă, икĕ пин хĕрарăма ытла — Социализмлă Ĕç Геройĕн ятне, 70 хĕрарăма—Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă. Наука, изобретательство, литература та искусство енĕпе пысăк çитĕнÿсем тунăшăн 601 хĕрарăм Сталинла премии илме тивĕçлĕ пулнă.

«...Эпир ĕç хĕрарăмĕсен ÿссе пыракан обществăллă активлăхне тата вĕсене ертсе пыракан вырăнсене ĕçлеме партипе ирлатпăр, вăл пирĕн культурăлăх ÿсние уççăнах кăтартакан паллă»,—тенĕ Сталин юлташ.

Пирĕн çĕршыври тĕнчере чи малта тăракан законсем ача амăшĕн ятне хисеплеççĕ, хĕрарăм ĕçне, ачалăха сыхлаççĕ.

Нумай ачаллă амăшсене тата пĕччен амăшсене 1950 çулта кăна государство 3,5 миллиард тенкĕ ытла пособи панă. 1951 çулта больница учрежденийĕсен, ача çуратмалли çуртсен, ача консультацийĕсен, диспансерсен тата ытти сывлăх учрежденийĕсен, çавнашкалах санаторисемпе кану çуртĕсен хисепне малалла ÿстерсе пынă. Больницăсемпе ача çуратмалли çуртсенче койкăсен хисепĕ, 1950 çулхипе танлаштарсан, 50 пине яхăнах ÿснĕ.

Совет влаçĕ ача амăшне хисеплет. Виçĕ миллион ытла хĕрарăма «Ача амăшĕн мухтавĕ» орденпа тата «Ача амăшĕн медалĕпе» наградăланă. Вуншар пин ача амăшсене «Ача амăшĕ-героиня» ятне панă, вĕсен кăкăрĕсем çинче Ылтăн Çăлтăр ялтăртатса тăрать.

Пирĕн халăх хуçалăхĕнче хĕрарăмсем çав тери пысăк вырăн йышăнса тăнине шута илсе, парти ача амăшĕшĕн производствăра та, йăлара та ытларах тăрăшма хушать.

* * *

Совет хĕрарăмĕсем—пĕтĕм тĕнчери мирлĕ пурнăçшăн хĕрÿллĕ кĕрешекенсем, вĕсем пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен юхăмĕн малти ретĕнче пыраççĕ. Пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле пирĕн çĕршыври хĕрарăмсем Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ пилĕк аслă держава хушшинче мире хÿтĕлемелли килĕшÿ тăвасси çинчен чĕнсе калани çине пĕр кăмăллă пулса алă пусрĕç. Хăйсем мире хÿтĕлеме хатĕр тăнине совет хĕрарăмĕсем пирĕн социализмлă Тăван çĕршывăн—мирпе халăхсем хушшинчи туслăх пулса тăракан çĕршывăн тĕрекĕпе ырлăхĕшĕн вăя шеллемесĕр ĕçленипе кăтартса параççĕ.

Этемлĕхĕн мирлĕ пурăнмалла тесе шутлакан совет ĕççыннисен шухăшне миршĕн тăракансен Пĕтĕм Союзри виççĕмĕш конференцийĕн делегачĕ, Социализмлă Ĕç Геройĕ, Черновицы облаçĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозри звеньевая Мария Мывытей лайăх каласа пачĕ:

— Эпир этемлĕхе çĕнĕ юнлă вăрçа кĕртсе яма тăрăшакан Англипе Америка империалисчĕсене ылханатпăр...

Пирĕн ĕç—миршĕн пыракан кĕрешÿре пурне те çĕнтерекен хĕçпăшал. Колхозлă ялти мĕнпур çамрăк ĕççыннисемпе пĕрле эпĕ çапла калатăп: «Мир вăрçа çĕнтерет! Пĕтĕм тĕнчери туслăхшăн, миршĕн!»

Совет хĕрарăмĕсемпе алла-аллăн тытăнса, Китай Халăх Республикинчи тата халăх демократи çĕршывĕсенчи хĕрарăмсем миршĕн активлă кĕрешеççĕ. Совет хĕрарăмĕсен ĕçне кура, вĕсем те вăйне шеллемесĕр ĕçлесе çĕнĕ пурнăç тăваççĕ.

Совет Союзĕнчи тата халăх демократи çĕршывĕсенчи хĕрарăмсем мартăн 8-мĕшне мирлĕ строительствăри çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илеççĕ пулсан, капитализмлă çĕршывсенчи, колонисемпе пăхăнса тăракан çĕршывсенчи хĕрарăмсем çак куна капитал ĕççыннисен пурнăçне тата пĕтĕм демократиллĕ ирĕклĕхсен юлашкисене çĕнĕрен хĕстерсе пынă условисенче кĕтсе илеççĕ.

Пĕтĕм тĕнчери мире юратакан хĕрарăмсем тĕнчере çĕнĕ вăрçă пуçарнипе, Хĕвеланăç Германипе Япони империализмне чĕртсе тăратнине татăклăнах хирĕçлеççĕ. Вĕсем Сталин юлташăн аслă сăмахĕсене асра тытаççĕ: «Мире сыхласа хăварас ĕçе халăхсем хăйсен аллине илсен тата ăна вĕçне çитиччен хÿтĕлесе тăрсан, мир сыхланса юлĕ тата тĕрекленĕ».

Мире хÿтĕлемелли килĕшÿ тăвасси çинчен чĕнсе калани çине алă пуснă 600 миллион çынтан—çурри хĕрарăмсем. Миршĕн тăракансен юхăмĕнче Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен демократиллĕ федерацийĕ пысăк вырăнта тăрать, вăл 64 çĕршыври 135 миллион хĕрарăма пĕрлештерет. Çак организацин малти ретĕнче миршĕн паттăр кĕрешекенсем, пĕтĕм тĕнчери Сталинла мир премийĕн лауреачĕсем Эжени Коттон, Моника Фелтон, Анна Зегерс, Сун Цзин-лин, Пак Ден Ай пыраççĕ. Совет хĕрарăмĕсем Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен демократиллĕ федерацийĕн хăватлă та активлă вăйĕ пулса тăраççĕ.

Совет хĕрарăмĕсем пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсемпе интернационаллă çыхăнусене ывăнма пĕлмесĕр çирĕплетсе пыраççĕ, вĕсемпе пĕрле пĕтĕм тĕнчери мирлĕ пурнăçшăн, халăхсем хушшинчи туслăхшăн, çĕнĕ вăрçă чĕртекен империалистсене хирĕç кĕрешĕве вăйлатса пыраççĕ.

Уйăп МИШШИ

Чăваш хĕрĕсем Мускавра

Мускавра çуртсем çÿлĕ-çÿлĕ,
Чылай кермисем пĕлĕтелле.
Тĕлĕнсе мĕн чухлĕ пăхнă пулĕ
Эпĕ çав çуртсен умĕнче.

Пăринче ирĕксĕрех тăп тăтăм:
— Эй, васка!—тет, чăвашла, тахши.
Вран çĕклерĕ çÿлелле пĕр йăтăм,
Тутарла тепри калать: якши!

Кĕç крана татах тиен йăтăрчĕç,
Вунпилĕк хутне, мĕн кирлине,
Вăл уйăхтарса парать вăр-вар сес,
Кирпĕч хуракан сыпсем патне.

Куç ытамĕ çитмĕн катмаррăн
Çĕкленет мăн çурт сан умăнта.
Ырă сăн, чăвашла та тутарла
Янăраççĕ чĕлхисем кунта.

Акă, чăвашла каласанăн,
Ĕçсĕсем çиççĕсĕ чипеккен.
Юмахри тăрна пек çÿлĕ кранĕ
Унăн аллинче вылять иккен!

— Чăвашсем кунта эпир нумайăн,
Хăй ĕçне кашни аван пĕлет —
Канăшăн йăл-йăл кулнă майăн
Хĕр çÿçне кăшт юсаса илет.

— Университет çуртне тăватпăр,
Савнă Мускава илем кÿме.
Хамăр та ĕмĕтленсе тăратпăр
Çав çуртра телейлĕн вĕренме...

...Атăл тăрăхĕнче выртаççĕ аслă,
Ылтăн хумлă ирĕк уй-хирсем.
Савăнтă ĕçлеме янкăш саслă
Çак хастарлă та ĕçчен хĕрсем.

Колхозри ĕçре пиçсе тухтăмăр,
Кам пĕлес халь хĕрупрас çулне?
Çутă ĕмĕт-шухăш çунатланнă,
Мускава çитернĕ вĕсене.

Шанчăк çитĕ сирĕн, ĕмĕт тулĕ,
Коммунизм хĕвелĕн ăшшинче.
Аслă, çутă хĕрупраçăн çулĕ
Пирĕн Совет çĕршывĕнче!

Александр АЛГА

Санăн аннÿ

Вăл сан çинчен шухăшланă
Эсĕ ÿт илнĕ чухнех,
Савăннă та пăшăрханнă:
Кĕтнĕ сана тем пекех.

— Пултăрччĕ сын! Ÿстĕр паттăр,
Куртăр кун-çул телейне,
Пĕтĕм чунтан-и юратăр
Амăшĕпе çĕршывне.

Сын! Мĕн тери ĕмĕтленнĕ
Савăнтăн вăл чĕрере.
Эсĕ кулсан—хĕпĕртенĕ,
Куç хупăнман — чирлесен.

Вăл-çке, ĕçрен таврăнсассăн,
Ырнă пулсан та, сана
Йăтнă, чуптунă хăвассăн,
Савнă сан çутă сăнна.

Эс аслăватăн: хитреччĕ,
Усăччĕ кун ирхине.
Савăтрĕ, лăпкăн çитерчĕ
Вăл-çке сана шкул умне.

Ÿсрĕн телейлĕн те сыввăн,
Аслă, маттур яш пулса.
— Çитĕнчĕ,— терĕ,— ман ывăл!—
Санăн аннÿ савăнса.

Эс аслăватăн: хĕн çулччĕ,
Вăрçă тухсаччĕ çав çул,
Вăл хурланса тăрса юлчĕ,
Пусрĕ чуне йывăр чул.

— Ывăлăм, çирĕп пул!—терĕ,—
Ан парăнах çын юта!—
Хăй те Çĕршывăн ĕçлерĕ
Вăл кун-каçа, çĕр хута.

Эсĕ, фронтра аманссассăн,
Вилĕм тухсан куç умне,
Лăпкăн сывлярăн та ассăн,
Шăппăн çеç чĕнтĕн: «Анне!»

Савнă аннÿ кĕтсе илчĕ
Хăй ывăлне вăрçăран.
Сутăлчĕ кун. Ăшă силчĕ,
Вăл ыталарĕ майран...

Савнă, юратнă аннемĕр!
Вăл — чи хаклă тĕнчере:
Ун пилĕпе-çке мĕн ĕмĕр
Сывлăхлă пирĕн чĕре.

Вăл çитĕнтернĕшĕн паттăр,
Ырă та ăшă чунпа
Эпĕр ăна тан шутлатпăр
Хамăр Тăван Çĕршывпа.

Тава тивĕçлисенчен пĕри

Патша саманинче чăваш ачисемшĕн шкулсем алăкĕсем те хупă пулнă. «Чăвашăн мĕн вĕренмелли пур, унăн кĕнекине те ĕне çисе янă вĕт», тенĕ ун чухне чăваш халăхĕ çинчен. Çапла вара мĕскĕн чăваш ачисем хутран-ситрен çеç шкула лекме пултарнă. Акă мĕн каласа парать ун çинчен Чăваш АССР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учительници Пелагея Матвеевна Наперсткина.

— Пуçламăш шкула эпĕ 1907 çулта вĕренме кĕтĕм. 15 ачаран, хресчен ачисенчен эпĕ çеç пулнă вара. Шкулта вырăс хĕрача вĕренетчĕ, анчах вĕсенчен эпĕ çеç малалла вĕренме кайрăм,—тет вăл.

Пуçламăш шкултан вĕренсе тухнă хыççăн çак чăваш хĕрачин татах вĕренес кăмăл пулнă, анчах та унăн ашшĕн Наперсткин Матвин хĕрне вĕрентме укçа пулман. Пурăнма йывăр пулсан та, Матви хĕрачине малалла вĕрентесшĕн пулнă. Çак ĕмĕтпе вăл ăна Чĕмпĕрти чăваш шкулне илсе кайнă. Вĕсем тÿрех Чĕмпĕрти чăваш шкулне ертсе пыраканĕ патне, чăвашсен чи малтанхи педагогĕ Иван Яковлевич Яковлев патне кайнă. Чухăнсен йывăр пурнăçне тĕпĕĕн пĕлекен Иван Яковлевич вĕсене пкĕшне те хăй патĕнче апатлантарнă хыççăн çĕр касма ирĕк панă. тепĕр кунне Пăлакине вĕренме илни çинчен пĕлтернĕ.

Вĕреннĕ вăхăтра чылай йывăрлăхсем тÿснĕ пулин те, П. М. Наперсткина Чĕмпĕрти шкултан вĕренсе тухса учительница ятне илме тивĕçлĕ пулнă. Ун хыççăн вăл хăйсен ялĕнчех учительница пулса ĕçлеме тытăннă.

...Тăвăллă Октябрь çитнĕ. Тинех ĕнтĕ ĕлĕкхи, патша саманинчи, чиркÿ сĕрĕмĕпе мухмăрласа çÿренĕ çынсемшĕн çутă хĕвел йăлкăшса тухнă. Хĕвел пайăркисем чăваш çĕршывне те çутатма пуçланă — чăваш хресчен ачисемпе хĕрĕсене те шкулсенче вĕренме пĕр тан правасем панă. Пелагея Матвеевна ачасене пысăк хавасланăхпа вĕрентме пуçланă.

Вăл хăй вĕрентекен ачасене патша саманинче чăваш ачисене шкулта вĕренме мĕнле йывăр пулни çинчен пĕрре çеç мар каласа панă. Унăн класĕнчи ачасем хăйсен учительницине хисеплеççĕ, вăл каланине яланах юратса итлеççĕ.

Халăха сутта кăларас енĕпе 36 çул хушши ĕçленĕ ватă учительницăн пурнăçĕпе ĕçри паха опычĕсем çинчен, паллах ĕнтĕ, нумай çырма пулать. Эпир вăл вĕрентекен класа кĕрсе куртăмăр. Илемлĕ йăлтăртатса тăракан парттăсем хушшинче 3-мĕш класра вĕренекен ачасем ватă учительница каланине тимлĕн итлесе ларaççĕ. Сутă та таса класри стенасем çинче сулпуççен сăнĕсем тата ачасене отличнo вĕренме чĕнекен лозунгсем.

— Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче Наперсткина юлташ вĕрентекен ачасем пурте «5» тата «4» паллăсемпе вĕренсе тухрĕç. Иккĕмĕш çула юлни тата кĕркунне экзаменсем пама хăварни пĕр ача та пулман, пурте пиллĕкмĕш класа куçнă,—тет Батекри сичĕ çул вĕренмелли шкул директорĕ.

Пелагея Матвеевна хăйĕн халăха çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлесе туяннă паха опытне çамрăк учительсем хушшинче сарать. Унăн усăллă канашсем питĕ нумай. Вăл учительница пулса ĕçлеме пуçланăранпа 820 ачана пуçламăш шкултан вĕрентсе кăларнă. Пелагея Матвеевна вĕрентсе кăларнă ачасенчен нумайăшĕ хамăр районта учительсем, совет тата парти работникĕсем пулса ĕçлеççĕ. Вăл вĕрентсе кăларнă ачасенчен инженерсем, техниксем, ялхуçалăхĕпе медицина работникĕсем, çар çыннисем те пур. Пелагея Матвеевна Тăван çĕршывăн тĕрлĕ кĕтессисенчен кашни кунах çырусем илсе тăрать. Ăна хăй вĕрентсе кăларнă ачасем нумай çул хушши пурăнма сывлăх сунаççĕ.

Пелагея Матвеевнăн ачисене те мухтамалла. Аслă ывăлĕ—инженер, Геннадий—Горькинче икĕ çуллăх парти шкулĕнче вĕренет, Виталий—райсовет исполкомĕн сутĕç пайĕн заведующийĕ, Анатолий—ВКП(б) райкомĕн пропагандисчĕ, вĕсĕн хĕрĕ—Шупашкарта педагогика институтĕнче вĕренет.

Пелагея Матвеевнăн чыслă ĕçне партипе правительство тивĕçлипе хакланă. Ăна Ленин орденĕ тата «1941—1945 çулсенче Отечественнăй Аслă вăрçă вăхăтĕнче хастарлă ĕçленĕшĕн» медальпе наградăланă. Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ Хисеплĕ грамота парса наградăланă. 1950 çулта Чăваш АССР-ĕ 30 çул тултарнă ятпа Пелагея Матвеевна Наперсткинăна «Чăваш АССР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учительници» ятне панă.

Ватă учительница колхоз ĕçне те активлăн хутшăнать. Вăл бригадăри агитатор. Халĕ бригада членĕсене хăйĕн витĕмлĕ сăмахĕсемпе çуракине тимлĕн хатĕрленес ĕçре хавхалантарса пырать, коммунизмăн аслă стройкисем тата умра тăракан задачăсем çинчен каласа парать, ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ пирĕн республикăри ялхуçалăхĕ умне лартнă задачăсем çинчен колхозниксене куллен ăнлантарать. Тăван колхоза пуянлатассишĕн, колхозниксен пурнăçне пуян та культурăллă тăвассишĕн ырми-канми ĕçлет.

Пелагея Матвеевнăна 1946 çулта ВКП(б) членне илнĕ. Ку ĕнтĕ ватă учительницăшăн калама çук савăнăç!

— Совет хĕрарăмĕсем—тĕнчере чи малта пыракан советлă социализмлă культурăн активлă деятелĕсем. Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунне—мартăн 8-мĕшне эпĕ ĕçри çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илетĕп. 60 çула çитрĕм пулсан та çамрăксемпе пĕрлех савăнса ĕçлетĕп, ма савăнас мар-ха манăн халĕ пĕтĕм çулсем пире коммунизм патне илсе пынă вăхăтра.—тет Пелагея Матвеевна.

И. МЕЩКОВ.

Чкаловски район.

Тĕнчери çĕршывсен Мускаври экономикăллă канашлăвĕ умĕн

ЛОНДОН, мартăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли уоркер» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Пĕтĕм тĕнчери çĕршывсен Мускаври экономикăллă канашлăвне Англирен каймалли делегацие хуçалăхăн тĕрлĕ отраслĕсен представителĕсем кĕреççĕ. Делегаци составĕнче сахалтан та хуçалăхăн тăхăр отраслĕн представителĕсем, темиçе паллă экономист, парламент членĕсем тата профсоюз деятелĕсем пулаççĕ.

Хаçат пĕлтернĕ тăрăх, делегаци составĕнче пулма халех ĕнтĕ ялхуçалăх представителĕсем, полиграфи промышленноçĕн, пир-авăр промышленноçĕн, йывăçран япаласем тăвакан, станоксем тăвакан, çемçе çăмлă тир тăвакан, тăмран тĕрлĕ япаласемпе савăт-сапа тăвакан промышленноçсен тата транспорт машиностроенин представителĕсем кĕме килĕшнĕ. Канашлăва кайма хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлекен комитет тунă. Комитет Лондон хулинче ĕçлет.

Машиностроительсен пĕрлештернĕ профсоюзĕн Абердин хулинчи райкомĕ профсоюз исполкомĕнчен хăйĕн представителĕсене канашлăва яма ыйтать.

ПАРИЖ, мартăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Франс пресс агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Пакистанри хуçасемпе сутăçсен 8 представителĕ тĕнчери çĕршывсен Мускаври экономикăллă канашлăвне каясшăн. Делегацие Пакистанăн Учредительнăй пухăвĕн членĕ Миан Ифтихаруддин ертсе пырать (вăл—Пакистанри чи пуян çĕр хуçисенчен пĕри).

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНАЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле тăшмана хирĕç оборонăра тăрса çапăçаççĕ, Америкăпа Англи интервенчĕсен тата Ли Сын Ман çарĕсен салтакĕсемпе офицерĕсене тата техникине чылай пĕтереççĕ.

Паян Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тăшманăн икĕ истребительне персе ÿкернĕ, çав самолетсем уйччен, ытти самолетсемпе пĕрле Вонсан, Нампхо тата Сукчхонь районĕсене тапăннă пулнă.

КОРЕЯ ХАЛĂХĔ АМЕРИКА ИНТЕРВЕНЧĔСЕН ТИСКЕР ĔÇĔСЕНЕ ХИРĔÇ ПРОТЕСТЛЕТ

ПХЕНЬЯН, мартăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). «Нодон Синмун», «Минчжу Чосон» тата ытти хаçатсем те Америка интервенчĕсем бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курнине тăрă шыв çине кăларакан фотоÿкерчĕксем пичетленĕ. «Минчжу Чосон» хаçатра пичетленнĕ пĕррĕмĕш ÿкерчĕк çинче: бомба ÿксе сурăлнă хыççăн юр çинче сÿрекен бактериллĕ хурт-кăпшанкăсем. Иккĕмĕш ÿкерчĕк çинче—бомба ăшне мĕнле тунине, ăна тăватă çĕртен пÿлнине кăтартнă, çав пÿлĕмсене хурт-кăпшанкăсем тултарнă пулнă. Тепĕр икĕ ÿкерчĕк çинче: бактериллĕ бомба татăкĕсене тата çав бомбăн тулашĕ мĕнлине кăтартнă. Пиллĕкмĕш ÿкерчĕк çинче бомбăна шалта мĕнле тунине, бомба çĕр çине ÿксен, унăн хуппине уçакан механизма кăтартса панă.

Хаçатсем республикăри хуласемпе ялсенчен пыракан нумай пĕлтерÿсене пичетлеççĕ. Çав пĕлтерÿсенчен Америка интервенчĕсем Корейăра çĕнĕрен тискер ĕçсем тунине хирĕç ĕççыннисем хытă протестлени курăнать. Çĕршывра пур çĕрте те митингсемпе пухусем ирттереççĕ. Митингсемпе пухусенче ĕççыннисем çĕнĕ тискер ĕçсем тăвакан американецсене сулпа айăплама ыйтаççĕ. Хаçатсем кун пирки рабочисем, хресченсем, интеллигенци представителĕсем тата обществăллă деятельсем мĕн калани çинчен çыраççĕ, пурте Америка интервенчĕсен преступленийĕсене, Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕн кăвак ялавĕпе витĕнсе тăвакан преступлениллĕ ирсĕр ĕçсене хытă вамăслантарса питлеççĕ.

Япони промышленноçĕнчи йывăрлăх

ТОКИО, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Киодо Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Япони правительстви кăçалхи март уйăхĕнчен пуçласа пир-авăр промышленноçĕн ĕçне 40 процент чакарма хушнă. Искусственнăй сÿс тăвакан предприятисем январь уйăхĕнчепе хăйсен производствине чакарнă. Удобрени, сода, хут тăвакан предприятисенче те производствăна чакарса пыраççĕ. Тимĕртен тата хурçăран куллен кирлĕ япаласем туса хатĕрлесси те чакса пырать.

«Дайнкен миппо» хаçат пĕр тĕслĕх пичетленĕ. Çав тĕслĕхрен США-па суту-илÿ туни Японин машинăсем тăвакан промышленноçне пĕтсе ларасси патнех ситерни курăнать. Машинăсем тăвакан предприятисен «Фудзи сеймицу когио» компанийĕ США-ран çĕвĕ çĕлемелли машинăсене йÿнĕ хакпа илме килĕшÿ тунă. Америкăри хуçасем хăйсем çав машинăсене тăватă хут хаклăрах сутаççĕ. Кунсăр пуçне, Японире туса хатĕрлекен хăшпĕр машинăсене США-ра пухаççĕ те каялла Японие илсе пырса сутаççĕ, çав машинăсем çине «Зингер» тесе çырнă марка лартаççĕ.

Китай халăх республикинчи хĕрарăмсем

ПЕКИН, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Халăх влаçĕ туса хунăранпа Китайри хĕрарăмсем пур енĕпе те арçынсемпе пĕртан правăсем илнĕ. Вĕсем халĕ Китай Халăх Республикинче çĕнĕ пурнăç тăвас тĕлĕшпе активлă ĕçлеççĕ.

Республикăн центральнăй халăх правительствин учрежденийĕсенче ертсе пырас ĕçре 36 хĕрарăм ĕçлет Вĕсем хушшинче—Центральнăй Халăх Правительстви Совечĕ председателĕн заместителĕ Сун Цзин-лин, совет членĕсем: Хэ Сан-нин тата Цай Чан, юстици министрĕ Ши Лян, сывлăха сыхлас ĕç министрĕ Ли Дэ-цюань тата ыттисем те.

Китай Халăх Республикинче вак национальноçсем нумай. Ертсе пырас ĕçе çав национальноçсен хĕрарăмĕсене те хутшăнтарнă. Çапла, Синьцзян провинцийĕнче халăх влаçĕн органĕсенчи ертсе пыракан ĕçре тĕрлĕ национальноçсен 500 хĕрарăмĕ ытла ĕçлет.

Китай хĕрарăмĕсем республика промышленноçĕнче, транспортра тата ялхуçалăхĕнче пысăк ĕç тăваççĕ. Промышленноçра 650 пин хĕрарăм ĕçлет. Пир-авăр промышленноçĕнче ĕçлекенсем хушшинче—хĕрарăмсем 60 процент. Хĕрарăмсем ĕлĕк хăйсем нихçан та ĕçлемен профессисене вĕреннĕ. Нумай хĕрарăмсем предприятисен директорĕсем, строительство участокĕсен начальникĕсем, инженерсем, машинистсем, трактористсем пулса тата ытти çавнашкал ĕçсенче ĕçлеççĕ.

Пĕтĕм çĕршывĕпех производствăри патриотла ăмăрту анлă сарăлнă. Китай хĕрарăмĕсем çав ăмăртăва активлă хутшăнаççĕ. Çапла, Ляодун провинцийĕнче производствăра ĕçлекен мĕнпур хĕрарăмсен 95 проценчĕ ытла ăмăртăва хутшăннă. Продукци нумай туса кăларассишĕн тата укçапа пуянăха перекетлессишĕн кĕрешнĕ вăхăтра хĕрарăмсем хушшинче пултаруллă ĕçлекенсем нумай палăрнă. Вĕсем халĕ çĕршыври паллă работникĕсем пулса тăраççĕ. Çапла, сăмахран, Циндаори 6-мĕш пир-авăр фабрикинчи çип арлакан Хао Цзян-сю ăста ĕçленипе палăрнă, унăн опытне халĕ пĕтĕм çĕршывĕпех вĕренеççĕ. Ирĕклĕхшĕн кĕрешекен çар ретĕнче гоминдановецсене хирĕç паттăр çапăçнă Дун Ли-шэн халĕ çĕршыври паллă трактористка пулса тăрать. Цзян Чжон-юн—Хуайхэ юханшывĕ çинче гидротехника сооруженийĕсем тунă çĕрте главнăй инженер заместителĕ пулса ĕçлет.

Китай ялĕсенчи хĕрарăмсен политикăллă ăнланулăхне ÿстерес, вĕсене çĕршывăн политикăллă тата культурăллă пурнăçне хутшăнтарас ĕçре çĕршывăн пысăк пайĕнче çĕр реформине ирттерни усăллă пулнă. Çĕр реформи ирттернĕ май, нумай хĕрарăмсене влаçсен ялти тата уездсенчи органĕсене ертсе пырас ĕçе уйăрса лартнă.

Китай Халăх Республикинче хĕрарăмсене çĕршыври пур шкулсенче те вĕренме условисем туса панă. Китайри хĕрарăмсен пысăк пайĕ хут пĕлмен пулсан, хĕрарăмсем халĕ хут вĕренеççĕ.

Халăх правительстви хĕрарăмсен пурнăçне лайăхлатма хытă тăрăшать. Хальхи вăхăтра ача яслисемпе ача сачĕсенче рабочисемпе служащисен 500 пин ытла ачине пăхса ÿстереççĕ. Ялсенче уй-хирти ĕçсем вăхăтĕнче ача сачĕсемпе ача яслисем нумай уçаççĕ. 1951 çулта ялсенче ача яслисемпе ача сачĕсем 1950 çулхинчен 106 хут ытларах пулнă.

Китайри хĕрарăмсем миршĕн кĕрешес ĕçе активлăн хутшăнаççĕ.

Австрири демократиллĕ хĕрарăмсен союзĕ чĕнсе калани

ВЕНА, мартăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунне — мартăн 8-мĕшне уявланă май, «Австрири демократиллĕ хĕрарăмсен союзĕ» чĕнсе каланине пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă:

Мĕнпур çĕршывсенчи хĕрарăмсем Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунне мире сыхласа хăварассишĕн тата хăйсен ачисен пурнăçне хÿтĕлессишĕн кĕрешес лозунгпа ирттереççĕ. Нумай çĕршывсенче хĕрарăмсем ачасене лайăх пурнăç туса парассишĕн, пусмăра тата эксплуатацие хирĕç кĕрешме пĕрлешеççĕ.

Хĕрарăмсем, ача амăшĕсем!

Австрире ĕççĕр тăрса юлнă çынсен йышĕ ÿссе пырать. Американецсем приказ панă тăрăх, правительство çар хатĕрĕсем туман предприятисене хупать. Вăрçă хатĕрленнине пула, вуншар пин рабочисем çăкăрлăх та ĕçлесе тупаймаççĕ, çавсем вĕсем—сирĕн мăшăрусем, сирĕн ывăлăрсем, эсир хăвăр.

Нумай ачасем халĕ путвалсенче пурăнаççĕ, пĕр кровать çинче иккĕн-виççĕн сывăраççĕ, вĕсен ăшă тумтир тата атă-пушмак çук. Арçынсене ĕçрен кăларса ярсан татах мĕн пулма пултарать-ха?

Мобилизаци çинчен кăларнă приказсем сирĕн килйышусене аркатса хăварнă, сире çар завочĕсенче ĕçлеттернĕ, пĕчченшерĕн тăратса хăварнă тата асап кăтартнă вăхăтранпа темиçе çул кăна иртрĕ. Халĕ тепĕр хут çавăн пек приказсем хатĕрлеççĕ. Фигль правительствипе американецсем Австрие пайлас тĕлĕшпе, пирĕн çĕршывăн хĕвеланăçĕнчи пайне хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсене хирĕç вăрçă вăрçмалли плацдарм туса хурасси çинчен, пирĕн çамрăксене американецсемшĕн çапăçса вилсе пĕтмелли салтаксем тăвасси çинчен килĕшÿ туса алă пусни çинчен Америка хаçачĕсем пĕлтерчĕç. Австрин вуншар дивизин тума, 150 пин çынлă çар пухма хатĕрленеççĕ. Çав 150 пин салтак — сирĕн мăшăрусемпе ывăлăрсем.

Хальхи вăхăтра пирĕн çĕршыв пайланса каясçине тата унтăн вăрçă плацдармĕ туса хурассине чарса лартма май пур-ха,—тенĕ малалла чĕнÿре.—Çакна пурнăçласси сирĕнтен килет. Хăвăр мăшăрусене—ĕççĕр тăрса юлассинчен хÿтĕлĕр, хăвăр ачăрсене—выçлăхран хÿтĕлĕр, тăван çĕршыва—пайлассинчен хÿтĕлĕр. Хамăр çĕршыва Америкăн Атлантика çарне хутшăнтарассинчен, хамăр упăшкасене çар службине илессинчен, фронта илсе кайса вĕлерессинчен хÿтĕлеме, хамăр ачасене Америка бомбардировщикĕсенчен хÿтĕлесе хăварма тăрăшар.

Латинла Америкăри хĕрарăмсем миршĕн тата хăйсен прависемшĕн кĕрешеççĕ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Латинла Америка çĕршывĕсенче хĕрарăмсене экономика енĕпе питĕ хытă эксплуатацилеççĕ, шур ÿтлĕ мар халăхсен хĕрарăмĕсене нимĕн те хисеплемеççĕ. Кунсăр пуçне унти хĕрарăмсен чи кирлĕ демократиллĕ правăсем те çук. Колумби, Парагвай, Гондурас тата Никарагуа çĕршывĕсенче хĕрарăмсен суйлав прави çук. Мексика, Перу, Боливи тата Гаити çĕршывĕсенче хĕрарăмсем муниципалитетсене суйланă çĕре çеç хутшăнма пултараççĕ.

Хĕрарăмсене çавăн пек хисеплемеççĕ пулин те, вĕсене обществăллă пурнăçа хутшăнма чараççĕ пулин те, Латинла Америка çĕршывĕсенчи хĕрарăмсем политикăра ытларах та ытларах интересленме тытăнаççĕ, вĕсем миршĕн тата империализмла пусмăрлăха хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе пысăк ĕç тăваççĕ. Миршĕн тăракансен комитечĕсен сведенийĕсем тăрăх, Латинла-Америка çĕршывĕсенче мире сыхласа хăварма чĕнсе калакан çыру çине 10 миллион çын алă пуснă пулсан, çавсен виççĕмĕш пайне асăннă çыру çине хĕрарăмсем алă пустарнă.

Америка континентĕнчи миршĕн тăракансен конгресне хатĕрленес ĕçе çав çĕршывсенчи паллă хĕрарăмсем нумайăшĕ хутшăннă.

Латинла Америкăри хĕрарăмсен организацийĕсем, ытти прогрессивнăй вăйсемпе пĕрле, Корейăна çарсем яма чараççĕ. Иртнĕ çулта Бразилире ача амăшĕсен, хĕрарăмсен тата ÿссе çитнĕ хĕрсен демонстрацийĕсем пулнă. Çав демонстрацисене ирттернипе вĕсем влаçсене Корейăна вăрттăн ăсатма хатĕрленĕ пĕр рота салтака унта яма чарнă. Чили, Куба тата Боливи правительствисем вăрçă пуçлансанах США-на Корейăри интервенцие пулăшма сăмах панă, анчах хĕрарăмсем демонстрацисем ирттерсе правительствăсене çав сăмаха пурнăçлама памаççĕ.

Латинла Америкăри хĕрарăмсен организацийĕсем Вашингтонри правительсен вăрçă хатĕрлес политика тытса пынине, çавна пула Латинла Америкăри çĕршывсенчи халăх массисен пурнăçне начарлатнине хирĕç хытă протестлеççĕ. Хаçатсен корреспонденчĕсем Рио-де-Жанейро хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, кăçалхи февраль уйăхĕнче Рио-де-Жанейро, Сан-Пауло, Бело-Оризонт хулисенче тата Бразилири ытти хуласенче хĕрарăмсен пысăк демонстрацийĕсем пулса иртнĕ. Хĕрарăмсем пурнăçра кирлĕ япаласен хакĕсене йÿнетме тата вăрçă пынă пирки пуякан çынсене хирĕç мерăсем йышăнма ыйтнă. Куритиба хулинче тарăхса çитнĕ хĕрарăмсен ушкăнĕ апат-çимĕç магазинĕсене тапăннă. Вĕсемпе полици хушшинче тытăçусем пулса иртнĕ. Çавăн чухне пĕр хĕрарăма вĕлернĕ, темиçе хĕрарăма амантнă тата чылайăшне тытса хупнă. Çавăн пек протестлес юхăм анлă сарăлнă пирки правительство спекулянтсене хирĕç мерăсем йышăнма сăмах панă.

Коммунистсен «Нуэстра палабро» хаçачĕ пĕлтернĕ тăрăх, Аргентинăра пурнăçра кирлĕ япаласем хакланнине хирĕç кĕрешме хĕрарăмсен комитечĕсене организациленĕ.

«Нотисиас де Ой» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Кубари хĕрарăмсен пысăк организацийĕ—Кубари демократиллĕ хĕрарăмсен федерацийĕ пĕтĕм çĕршывĕпех пурнăçра кирлĕ япаласем хакламаннине хирĕç, апат-çимĕçсен хакĕсене йÿнетессишĕн кĕрешмелли кампани пуçарнă. Чилипе Мексикăра та çавăн пек кампани ирттереççĕ.

БОНРИ ПРАВИТЕЛЬСТВО ÇАР АЭРОДРОМĔСЕМ ТĂВАТЬ

БЕРЛИН, мартăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви Бонн хулинчен çакăн çинчен пĕлтерет: хĕвеланăçĕнчи оккупаци держависен авиаци ыйтăвĕсемпе Майн çинчи Франкфуртра ĕçлекен управленийĕ, Потсдамри килĕшĕве пăсса, Бонри правительствăна аэродромсем тума официальнăй йĕркепе ирĕк панă. Аэродромсем тума ирĕк паричче Хĕвеланăç Германин 1.700 самолетран тата 40 пин çынран тăракан сывлăш-çарне тума хатĕрленсе çитнĕ. Кун хыççăн вара аэродромсем тума ирĕк панă.

ЧĂВАШ АССР-ĕнчи МТС-сем КĔРКУННЕПЕ ХĔЛЛЕХИ ВĂХĂТРА ТРАКТОРСЕМ ЮСАМАЛЛИ ПЛАНА 1952 ÇУЛХИ МАРТĂН 5-мĕшĕ ТĔЛНЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА (процентпа)

МТС-сем	Плана тултарни
1. Шăмăршă	100,0
2. Пăрачкав	96,1
3. Çĕмĕрле	84,9
4. Элĕк	82,4
5. Сурмайдан	82,1
6. Етĕрне	81,1
7. Вăрмар	75,3
8. Куславкка	75,0
9. Советски	73,9
10. Улатăр	73,6
11. Куванино	72,7
12. Сĕнтĕр	67,9
13. Канаш	67,4
14. Çĕрпÿ	66,7
15. Хĕрлĕ Чутай	65,9
16. Муркаш	65,7
17. Вăрнар	65,4
18. Шăхасан	63,6
19. Чкаловски	63,6
20. Октябрьски	63,4
21. Сĕнтĕрвăрри	63,0
22. Ишлей	62,9
23. Елчĕк	62,8
24. Тăвай	62,5
25. Красноармейски	61,7
26. Йĕпреç	61,7
27. Первомайски	61,4
28. Сиява	61,3
29. Шупашкар	60,0
30. Комсомольски	59,6
31. Калинино	55,8
32. Чурачăк	53,8

РСФСР-ти хуласен телеграф тăрăх ирттерекен шахмат турнирĕ

РСФСР-ти хуласен телеграф тăрăх ирттерекен пĕррĕмĕш шахмат турнирĕ 1948 çулта пулнă. Шупашкар команди ун чухне 5 очкоран 2 очко пухнă.

1949 çулта, 5 очкоран 4,5 очко пухса, Шупашкар шахматисчĕсем пĕррĕмĕш группăра выляма тивĕçлĕ пулчĕç. 1950 çулта, пĕррĕмĕш группăра малтанхи хут ăмăртса, Шупашкар шахматисчĕсем, мастерсем ертсе пыракан Иваново тата Сталинград хулисен шахмат коллективĕсене çĕнтерчĕç.

Халĕ пирĕн шахматистсем Владивосток, Улан-Удэ, Челябинск, Сталинград, Иваново тата Архангельск хулисен шахмат командисемпе ăмăртса выляççĕ. Паянхи кун тĕлне фигурăсене 20 хутчен куçарнă. Челябинск шахматисчĕсемпе пыракан вăйăра Шупашкар шахматисчĕсем çĕнтерессi паллă. Улан-Удэ шахматисчĕсем Шупашкар командипе хытă кĕрешеççĕ. Шупашкар шахматисчĕсене Чăваш АССР чемпионĕ В. Сергиевский ертсе пырать.

Ăмăрту мĕнле пынине кăтартакан хăмасене тата бланксене «Искра» спорт обществин клубне вырнаçтарнă. Пур шахматистсем те, вăл хăмасемпе бланксене сăнаса пырса, хăйсен сĕнĕвĕсене пама пултараççĕ.

Ответлă редактор заместителĕ И. П. ПАВЛОВ-ПИНЕР.

ЧĂВАШ ГОСУДАРСТВО АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ

Паян, мартăн 8-мĕшĕнче, каçхине вырăсла спектакль „ЖЕНИТЬБА“

Ыран, мартăн 9-мĕшĕнче, кăнтăрла вырăсла спектакль „ЖЕНИТЬБА“

Каçхине—чăвашла спектакль „Пурнăçа юратса“ (Юлиус Фучик)

Спектакльсем кăнтăрла 12 сехетре, каçхине 8 сехетре пуçланаççĕ.

„Родина“ кинотеатрта

Паян, мартăн 8-мĕшĕнче, „ЧЛЕН ПРАВИТЕЛЬСТВА“

Ыран, мартăн 9-мĕшĕнче, Китайра кăларнă çĕнĕ илемлĕ фильм „Сын степей“

Сеанссем 12, 14, 16, 18.15, 20 тата 22 сехетре пуçланаççĕ.

Н. В. Гоголĕн 6 томлă сочиненийĕсене илсе тăма çырăнтарма тытăннă. Ку кĕнекесене 1952—1953 çулсенче пичетлесе кăлараççĕ. Пĕтĕм изданийĕн хакĕ 48 тенкĕ. Кашни томĕ 8 тенкĕ тăрать.

Çак кĕнекесене илсе тăма Чăвашкниготоргăн пур кĕнеке магазинĕсенче те çырăнма пулать, унтах çав кĕнекесене илсе тăмалли йĕркесемпе те паллашма пулать.

ЧĂВАШКНИГОТОРГ.

1952 ÇУЛХИ ИККĔМĔШ КВАРТАЛШĂН

Хаçат-журнал çырăнакансенчен подписка илме пуçланă.

Хаçат-журналсене «Союзпечатĕн» вырăнти органĕсенче, çавăн пекех тата фабрикăсемпе заводсенче, вĕренÿ заведенийĕсенче, учрежденисенче, колхозсемпе совхозсенче кутĕлĕшпе ĕçлекен обществăллă уполномоченнăйсем урлă

çырăнса илме пулать.

«СОЮЗПЕЧАТЬ».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского. 5 Дом печати ТЕЛЕФОНСЕМ ответлă редактор—0-67 ответлă редактор заместителĕ—3-99 ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ялхуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01256 Типографи № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.